24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
АВГУСТ
2
ШАМАТКУН
180 (5895) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАРАЧĔ.

Çĕршыв оборонин хăватлă фондне тăвар

Гитлерла Германия пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнса кĕнĕренпе пĕр уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ. Фашистла агрессин çак вăрăхурахла актне хирĕç совет халăхĕ, аслă Сталин юлташ ертсе пыни тăрăх ĕçлесе, хăйĕн речĕсене пĕтĕçтернипе, вăрă-хурахла бандăсене çапса аркатма тата тĕппипех пĕтерсе тăкма мĕнпур вăйсене мобилизациленипе ответлерĕ.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ аслă Сталин чĕннипе пирĕн социализмлă çĕршыв, мĕнпур организацисем, мĕнпур ĕçсыннисем хăйсен ĕçĕсене çĕнетсе урăхлатрĕç. Халĕ пĕтĕм çĕршыв фронт валли, усал та тискер тăшмана — фашистла Германие пĕтерсе тăкма ĕçлет. Хĕрлĕ Çăран фронтри паттăр кĕрешĕвĕ пирĕн рабочисемпе работницăсем фабрикăсемпе заводсенче, шахтăсенче, рудниксенче, пирĕн ученнăйсем лабораторисенче, пирĕн хресченсем уйхирсенче мĕнпур вăй-хала хурса ĕçленипе тачă сыхăнса тăрать. «Пурте фронт валли, пурте тăшмана çĕнтерме!» тенĕ лозунг Совет Союзăн кашни гражданинĕн боевой лозунгĕ пулса тăчĕ. Фронтпа тыл хушшинче уйрăмлăх çук, пирĕн боецсемпе командирсем тата политработниксем фронтра тăшмана хирĕç паттăрлăн çапăçаççĕ пулсан, тылри кашни рабочи, кашни хресчен тата кашни служащи хăйĕн пархатарлă ĕçĕпе фронта пулăшать.

ССР Союзĕнчи халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара пулăшма, тăшмана çĕмĕрсе тăкма мĕнпур вăйсене памашкăн чĕнсе каларĕ. Сталин юлташăн çак чĕнĕвне Совет çĕршывĕнчи миллионшар патриотсем пысăк хаваслăхпа йышăнса илчĕç. Тăван çĕршыва чĕререн юратса тăракан нумай рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем оборона валли çĕнĕ средствăсем мобилизацилеме халăхăн уйăм фондне тума сĕнчĕç. Совет патриотизмĕн движенийĕ çĕнĕ вăйпа сарăлса пырать. Пиншер çынсем хăйсен перекетленĕ средствисене, хаклă япаласене оборона фондне хывăççĕ.

Сталин юлташ чĕнсе каланине Чăваш республикинчи ĕçсыннисем те, Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле, пысăк хаваслăхпа йышăнса илчĕç. Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса калана хыççăнах, Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Чкаловски районĕ, Шăмăршă районĕнчи Чепкас-Никольски ялсовечĕ хăйсене çуракине кăтартуллă иртернĕшĕн паян преми укçине оборона фондне парăçĕç. Республикăри нумай кооперативсенче çулталăкри тупăшран пайщиксене валеçсе памалли укçана пайщиксем илмеççĕ, вăл укçана ССР оборонин фондне парăçĕ.

Совет Союзĕн Оборонин хăватлă фондне тăвас движени анлăн та анлăн сарăлса пырать. Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисем воскресник туса илнĕ укçана оборона фондне панă. Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи, ликеро-водочнăй заводри рабочисем вăрçă пĕтиччен кашни уйăхрах оборона фондне çирĕплетме пĕр кунхи ĕç укçине парса пыма йышăннă. Çĕмĕрле районĕнчи госбанк конторинче ĕçлекенсем пĕр кунхи ĕç-укçине оборона фондне çирĕплетмелли счет çине куçарнă та ĕнтĕ.

Колхозниксем те ССР оборонин фондне вăйлатма хăйсен вăйне хураççĕ. Вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарнине палăнмаççĕ. Планран иртерсе государствăна сĕт-çу, аш-какай, çăмарта, çу тата ытти продуктсем параççĕ. Çапла, Етĕрне районĕнчи «Сура» колхоз оборона фондне 1.000 литр сĕт, 500 çăмарта, «Пионер» колхоз 500 литр сĕт, 200 çăмарта панă. «Пионер» колхозри С. Федоров, Е. Мальков, С. Пугачев, А. Михайлов т. ыт. чылай колхозниксем 20-шер çăмарта панă.

Пирĕн Совет çĕршывĕ — хăватлă, индустриллĕ çĕршыв. Совет Союзăн резервисем çавтери нумай. Ана Совет халăхĕ, рабочисемпе хресченсем хăйсем ĕçлесе тунă. Анчах та совет халăхĕ хăйĕн резервине, чи малтан, оборона фондне яланах ӳстерсе пырассине нихăçан та манмасть. Гитлерла бандăсем Совет Союзĕ çине ултавлăн тапăннă пирки пирĕн çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăчĕ, çавăнпа та оборонăна нихăçанхинчен те ытларах вăйлатасси кашни ĕçсыннин хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать. «Фашистсен юнлă шухăшĕсене аркатса ярасси, Германи наступленине тытса чарасси, Гитлер çарĕсене поражени кӳресси — пирĕн вăйсенчен, организованноçрен килет. Çĕнтерӳ тăвас шутпа пĕтĕм вăйсене хумалла, фронтри кашни салтакăн, тылри кашни ĕççыннийĕн хăйĕн пĕтĕм вăйĕсене, кирлĕ пулсан çĕнтерӳшĕн хăйĕн пурнăçне те пама хатĕр тăмалла» («Правда»).

Совет патриочĕсем ССР оборонин уйрăм фондне тума пуçарнă хисеплĕ ĕç пирĕн вăйсене, резервсене тата ытларах вăйлатать, нумайлатать. Совет Союзĕн вăйĕ тата резерви хăватлă пулни Гитлерла Германишĕн питĕ хăрушă вăй пулса тăрать. Мĕншĕн тесен, гитлерла Германин резервисем кун-ран-кун чакса пĕтсе пынă вăхăтра, Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем çĕршыв оборонин фондне ӳстерсе пыни — винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумай туса кăларма май парать.

Пирĕн Хĕрлĕ Çăран тĕп вăйĕсем çапăçăва кĕреççĕ, тăшмана аркатмашкăн нумай миллионлă совет халăхĕ çĕкленчĕ. Халĕ, тăшмана часрах çапса аркатассишĕн хавхаланакан мĕнпур ĕçсыннисем çĕршыв оборонин хăватлă фондне тăвас ĕçе пуçарса ячĕç. Тăван çĕршыв оборонин фондне тума хăйсен перекетленĕ укçи-тенкине, средствине, япалине парса, Совет патриочĕсемпе патриоткисем хăйсем Сталин юлташ тавра, большевиксен парти тавра таччăн пĕрлешсе тăнине, хăйсен политикăлă-мораллĕ пĕрлăхĕ çирĕппине кăтартса параççĕ.

Совет халăхĕ мирлĕ строительство çулĕсенче нефть, тимĕр, çĕркăмрăкĕ, тĕслĕ металсен çĕнĕ вырăнĕсене туписа палăртса, пысăк запассем турĕ, пĕрремĕш вырăнта тăракан пиншер фабрикăсемпе заводсем турĕ, ялхуçалăх продуктивлăхне калама çук нумай ӳстерчĕ. Пирĕн çĕршывăн материаллă ресурссисем нумай. Çĕршывăн çакăн пек пуян та хăватлă экономики çумне хушса оборона фондне туни социализмлă державăн вăй-хăватне татах та вăйлатать, тăшмана çĕмĕрсе тăкассине васкатать.

Оборона фондне тăвассине ĕçсыннисем хăйсем тĕллĕн пуçарса ячĕç. Ана халĕ организацилесе ертсе пырасси парти, профсоюз тата комсомол организацисен задачи пулать. Кашни гражданина предприятире, учрежденире, колхозра оборона фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнма май туса памалла. Ĕçсыннисене вĕсем паракан укçа, япала ăçта кайни çинчен, оборона фончĕн политикăллă тата экономикăллă пĕлтерĕшĕ çинчен ăнлантарса памалла.

Тăван çĕршыв оборонин хăватлă фондне тăвар!

Совет халăхĕн иксĕлми вăйне тăшмана çĕмĕрсе тăкма мобилизацилер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

(1941 çулти июлĕн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 31-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ирхи сводкăра кăтартнă енсенче противника хирĕç çапăçнă. Уйрăмăнах Смоленск енче вăйлă çапăçусем пулса пынă, унта пирĕн войскăсем контрударсем туса противника вăл йышăнса тăракан позицисенчен хĕссе кăларнă, ăна пит пысăк çухатусем кӳнĕ, салтаксене тыткăна илнĕ тата трофейăсем туртса илнĕ.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле, противникăн мотомехчаçĕсемпе пехоти çине пыра-пыра тапăннă.

Сывлăшри çапăçусенче июлĕн 30-мĕшĕнче нимĕçсен 15 самолетне пересе антарнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

* * *

Тăшманăн инçетри тылĕнче разведчиксем Удоевпа Горюнов лейтенантсем пысăк аэродром тупса палăртнă. Çав аэродромран совет хулисем çине пырса тапăнакан нимĕç бомбардировщикĕсем вĕçе-вĕçе тухнă пулнă. Разведка даннăйĕсене илнĕ хыççăн, Н-ски авиачасть ирхине 5 сехетре çав аэродром çине пырса тухнă. Ун чухне аэродрома мирлĕ халăхсем çине вăрă-хурахла тапăнса килнĕ бомбардировщиксем анса ларнă пулнă. Семинпа Крутов лейтенантсен тата Лазунов старший лейтенантăн пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем тăшман машинисем çине бомбăсем тĕл пăрахнă. «Юнкерс-88» йышши 9 самолета тата 3 «Мессершмитта» пĕтерсе тăхнă.

* * *

Старший лейтенант Борщев ертсе пыракан пикировка тăвакан бомбардировщиксен звени Балти тинĕсĕнче Германин сторожевой икĕ карапĕ çине атакăланă. Пĕр бомба пĕрремĕш карапăн малти пайĕ çине ӳкнĕ, карап путнă. Иккĕмĕш карапне вăйлăн сиенленĕ, вăл дымовой завеса хыçне кĕрсе пытаннă.

* * *

Тинĕс çинчи Н-ски наблюдательнăй пост тинĕс çинче мотовоза çавăрса илнĕ, ун çинче паллă мар çынсем вунă çын пулнă. Вĕсем фашистсен диверсанчĕсем пулнă. Бандитсем пурте автоматла хĕçпăшалпа хĕçпăшаллаппа, вĕсен тĕрлĕрен суя докумнтсем пулнă.

* * *

Нумай миллионлă совет халăхĕ хăйĕн Тăван çĕршывне пĕтĕм чĕререн юратать. Отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче тăшмана геройла çĕмĕрсе пырса, предприятисемпе колхозсенче хастарлăн ĕçлесе, совет патриочĕсем çĕршыв оборонине вăйлатма хăйсен перекетленĕ укçисемпе пулăшаççĕ. Ĕçсыннисем хăйсен ирĕкĕпе взнос пухса Тăван çĕршыв оборони валли халăх фондне тăваççĕ. Оборона фондне кашни кунах çĕршер пин тенкĕ пырса кĕрет.

Мускаври «Красный пролетарий» заводри тата Ленинградри «Большевик» заводри рабочисемпе служащисем оборона фондне вăрçă вĕçлениччен кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçи чухлĕ хывма йышăннă.

Днепропетровскри Госбанк отделенийĕсенчен пĕрине пĕр гражданка пынă, вăл оборона фончĕ валли 10 пин тенкĕ тăракан бриллиантран тунă ярăм панă. Мускав хулинче пурăнакан Е. С. Григорьян та çавăн пек вклад хывнă.

Июлĕн 31-мĕшĕнче Шупашкартипе спиртзаводри рабочисемпе служащисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура завод директорĕ Дерюгин юлташ çĕршыв оборонин фондне тăвасси çинчен каласа панă. Доклад тăрăх премире Каразина, Полякова, Пегаева тата ытти юлташсем те тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте тискер фашизма хăвăртрах çĕнтерме, пĕтĕм вăйпа Хĕрлĕ Çара пулăшма хатĕр тăни çинчен каларĕç, аманнă красноармеецсене юн парса пулăшма донорсен ретне тăма çăмах панă. Тăван çĕршыв оборонине тĕреклетме кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине пама пулчĕç.

Работница Пегаева юлташ çапла каларĕ:

— Пирĕн совет çĕршывĕ çине тапăннă тăшманăн—Германи фашизмĕн халĕ вăйĕ пĕтсе çитмен-ха, вăл ултавлă та чее. Анчах пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕмĕрсе тăкатех. Хамăран Хĕрлĕ Çара эпир мĕнпур вăйпа пулăшатпăр. Эпĕ çĕршыв оборонине çирĕплетме тăшмана çĕнтерӳсенех кашни уйăхра пĕр кунхи ĕç укçине пама пулатăп. Хамăр коллектива та мăнран пример илме чĕнетĕп.

Пегаева юлташăн сĕнĕвне коллектив пĕр шухăшлă пулса йышăннĕ.

ЧАССР Верховнăй судĕнче ĕçлекенсем те оборона фондне кашни уйăхра пĕр кунхи ĕç укçине пама йышăннă.

М. Ч.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри ĕçсыннисем оборона фончĕ валли пĕр кунхи ĕç укçине параççĕ. Перекет кассинче ĕçлекенсем ĕнер митинга пухăнчĕç. Вĕсем, пурте пĕр саслă пулса, оборона фончĕ валли пĕр кунхи ĕç укçине пама йышăнчĕç. Паян вĕсем укçине государство банкне хыврĕç те ĕнтĕ.

Çавăн пекех, районри хаçат редакцинче ĕçлекенсем те пĕр кунхи ĕç укçине пама тата çĕнĕ заем укçине 8 уйăх хушшинче тӳлесе татма пулчĕç.

Чылай колхозсем государствăна тырă, сĕт-çу, аш-какай парса татаççĕ. «Красный Атмал», «Подгорная», «Волга», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем аш-какай обязательствине пурнăçласа тата темиçе центнер аш-какай хушса пачĕç. Нумай колхозсем тырă парма татаççĕ.

Х. ЛИСИН.

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартулăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ танковăй соединени командирне В. А. Мишулин полковника Совет Союз Геройĕн званине панă. Çакăнпа пĕрлех СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленипе В. А. Мишулин юлташа танковăй войскăсен генерал-лейтенантĕн званине панă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Совет Союзĕн Геройĕ В. А. Мишулин.

(ТАСС фотохроники).

Оборона фончĕ—хăватлă вăй

Çĕршыв оборонине çирĕплетме

Шупашкартипе макарон фабрикинче ĕçлекен хĕрарăмсем темиçе тĕрлĕ профессине вĕренсе алла илме тăрăшаççĕ. Сергеева тата Кожанова юлташсем прессовщица пулса ĕçлеççĕ, çав вăхăтрах вĕсем резчица тата раскладчица ĕçĕсене те лайăх туса параççĕ. Раскладчица Андреева юлташ вальцовка станокĕпе ĕçлеме вĕренет. Çак юлашки кунсенче Немихина юлташ чуста çăрмалли станокпа ĕçлеме вĕренме тытăннă. Вăл çак станокпа ĕçлеме вĕренсе, фронта кайнă арçынсен вырăнне ĕçлесшĕн.

Фабрика коллективĕнче пурте тăрăшса ĕçлеççĕ. Упаковщиксем Гурьев тата Боздеева юлташсем ĕç нормисене кулленех 150 процент тултараççĕ.

Çавнашкалах тăван çĕршыв оборонине çирĕплетме пулăшас майпа государствăна 2 тонна та 132 килограмм тимĕр-тăмăр пухса панă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах механик Шмаков юлташ активлăн ĕçленĕ.

Тимĕр-тăмăр пухас ĕç тир-сăран заводĕнче те лайăх пырать. Тимĕр-тăмăр пухас ĕçе кулленех туса пыраççĕ.

М. ЧУПРАКОВА.

Физкультурниксем—оборона фончĕ валли

Ленин орденлĕ «Спартак» тата «Динамо» спорт обществисен Шупашкарти футболисчĕсем августăн 3-мĕшĕнче юлташлă матч туса иртереççĕ. Вăйă Шупашкарти «Медик» стадионĕнче пулать. Çак вăйă валли билет сутнă укçана футболистсем йăлтах ССР оборонин фондне параççĕ.

Çак кунах стадионра штангистсен выступленийĕсем пулаççĕ. Штангистсен выступленине рекордсмен К. И. Милеев хутшăнать.

Гитлерла Германие çĕнтерме

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри колхозсемпе учрежденисенче ĕçсыннисен митингĕсем пулса иртереççĕ. Вĕсенче Совет Союз оборонин фондне тăвасси çинчен сӳтсе-явăççĕ. ВКП(б) райкомĕнче, райсовет исполкомĕнче, райпотребсоюзра ĕçлекенсем хăйсен пухăвĕнче оборона фондне кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине пама йышăннă.

ССР Совнаркомĕн председателĕ И. В. Сталин юлташ США Президенчĕн г-н Франклин Д. Рузвельтăн личнăй представительне г-н Гарри Гопкинса йышăнни

Июлĕн 31-мĕшĕнче **И. В. Сталин** юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕн г-н Франклин Д. Рузвельтăн личнăй представителĕпе г-н **Гарри Гопкинспа** иккĕмĕш хут калаçнă. Калаçу икĕ сехете пынă.

В. М. Молотов США Президенчĕн г-н Франклин Д. Рузвельтăн личнăй представительне г-н Гарри Гопкинса йышăнни

Июлĕн 31-мĕшĕнче Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов** юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕн г-н Франклин Д. Рузвельтăн личнăй представительне — г-н **Гарри Гопкинса** йышăннă, г-н Гарри Гопкинспа пĕрле йышăнура США-н Мускаври посолĕ г-н **Л. Штейгарт** пулнă.

Кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине—оборона фондне!

Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисемпе служащисем июлĕн 31-мĕшĕнче пуху туса ирттерчĕç. Пухура тăван çĕршыв оборонин фондне тăвасса çинчен тĕплĕн сӳтсе-явăрçĕç. Пуху питĕ ĕçлĕ те организованно иртрĕ. Кашни рабочи, служащи хăйĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха йăлтаса илет, совет халăхĕ хăйĕн хăватлă вăйĕпе тăшмана çĕмĕрсе тăкассишанса тăрать. Çавăнпа та вĕсем пурте пĕр шухăшлă пулса, тăван çĕршывăн оборонине татах та ытларах çирĕплетессишĕн тăрăшаççĕ.

— Эпир,—тенĕ пухура йышăннă резолюцире,—Совет Союзĕнчи ытти рабочисемпе, колхозниксемпе, интеллигентсемпе пĕрле, тăван çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнатпăр. Германи фашизмне тĕппинех çĕмĕрсе тăкичченех кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине çĕршыв оборонин фондне паратпăр.

Бригадăсен ăмăртăвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Именкассинчи «Малалла» колхоз июлĕн 31-мĕшĕнче вырăн-вырăнĕпе пулса çитнĕ ыраша вырма тухрĕ. Уборкăн малтанхи кунĕнчех пур бригадăсем те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ çавтери пысăк. Кашни колхозник тырпулсене кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртсе, фронтра Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пулăшас ĕмĕтпе пурăнать.

И. Х.

Пахча-çимĕçсем çителĕклĕ пулаççĕ

Çĕрпӳри педучилище çумĕнчи подсобнăй хуçалăхăн 6 гектар çĕр пур. Çак участок çинчен çулленех пахча-çимĕçсене йышлăн туса илеççĕ. Кăçал та çĕрулми, хăяр, помидор, кучăста тата ытти çимĕçсене нумай лартса ӳстереççĕ. Педучилищĕре вĕренекенсем кулленех пахчара ĕçлеççĕ. Сĕлĕпе вика утине çулса пуçтарчĕç. Йăрансем хушшинчи çумкуръăксене тасатсах тăраççĕ.

П. ПЕТРОВ.

Оборона валли мĕн кирлине пурне те парар!

Пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсене мĕн чухлĕ хытă отпор парать, ĕçсыннисен патриотизмĕ çавăн чухлĕ ӳсе пырать. Ишлей районĕнчи Тивĕшри, Васильккассинчи, Ишлейри тата ытти сельпосенчи пайщиксем 1940 çулта тупăшран пай укçисем çине хушса памалли 9982 тенкĕ укçана оборона фондне пачĕç.

Июлĕн 31-мĕшĕнче Чăвашпотребсоюзра ĕçлекенсем хăйсен пухăвĕнче оборона фондне кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине пама йышăннă.

Колхоз уйхирĕнче хĕрӳ ĕç пуçланать

КАНАШ, августăн 1-мĕш. (**Хамăр корр., телефонпа**). Асхвари «Хĕрлĕ хĕм» колхозри уйрăм бригадăсем, пулса çитнĕ вырăнсенче суйласа илсе, июлĕн 31-мĕшĕнче ыраш вырма тухрĕç. Колхозра 9 бригада, вĕсенчен 4 бригадăра тырă выраççĕ.

— Тырă пулса çитнĕ ĕнтĕ, вырма вăхăт, — тет колхозница Т. Федорова. Çак кунсенче ытти бригадăсем те вырма тухаççĕ. Сигнальнăй постсем ыраш пулса çитнине тăтăшах сăнаççĕ.

Т. МАЙОРОВ.

ВĂРМАР, августăн 1-мĕш. (**Телефон тăрах**). Районри «Социализм» тата «Коминтерн» колхозсем ыраш вырма тухнă.

Чылай колхозсенче кăçал иртнĕ çулсенче усă курман машинăсене юсаса хатĕрлесе хунă. «Арабось» тата «Маяк» колхозсенче иртнĕ çулсенче ним усăсăр выртнă жнейкăсене юсаса, кăçал ĕçе яраççĕ.

Колхозсенче ялхуçалăх машинисемпе туллин усă курас тата ĕçе тĕрĕс организацилес тĕлĕшпе агрономсем пулăшаççĕ. Вĕсене колхозсем сумне çирĕплетнĕ.

И. САПАРКИН.

Июлĕн 31-мĕшпе августăн 1-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсем Мускав çине пырса тапăнма хăтланни

Июлĕн 31-мĕшпе августăн 1-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсен темиçе эшелонĕ Мускав çине пырса тапăнма хăтланса пăхнă. Тăшман самолечĕсене Мускав тулашĕнче зенитнăй батарейăсенчен персе тата пирĕн çĕрлехи истребительсем аркатса янă. Хула патне пĕр-ик самолет çеç вĕçсе пынă. Самолетсем çинчен пăрахнă вут тĕртекен нумай мар бомбăсене вăхăтра сиенсĕрлетнĕ. Пурăнмалли çуртсенче тухнă пысăк мар темиçе пушара хăвăрт сӳнтернĕ. Вăрçă ĕçĕшĕн кирлĕ объектсене сиен туман.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(1941 çулти августăн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Августăн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Новоржев, Смоленск тата Житомир енĕсенче çапăçусем пынă.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче пысăк çапăçусемех пулман.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе таччăн сыхăнса ĕçлесе, противникăн мотомехчаçĕсене, пехотине, артиллерине хирĕç кĕрешнĕ тата тăшманăн заправка тумалли средствăсемпе пыракан автоколоннисем çине бомбăсем пăрахнă.

Пирĕн авиаци Балти тинĕсĕнче противникăн пĕр эсминецне путарнă тата тепĕр икĕ карапа пысăкăн сиенленĕ.

* * *

Подполковник Юров командир пулса ертсе пыракан полк противника Г. ятлă ялтан хĕссе кăларма приказ илнĕ. Атăкăна сĕм çĕрле пуçланă. Çĕнĕ флангра нимĕçсене суя атака туса улталаса, полк командирĕ капитан Кунин ертсе пыракан батальона юханшывăн тепĕр енне каçма, вăрмана шалалла кĕрсе тăшмана сылтăм флангран пырса çапма приказ панă. Çĕрле вăрманта штыксемпе вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Танксемпе тата артиллерипе усă курма май çуккипе, нимĕç командованийĕ Кунин ялтан батальонне хирĕç пысăк çар чаçне тăратнă. Анчах пуçарулăх пирĕннисем аллинче пулнă. Противника штыкпа тата гранатăпа вăйлăн çĕмĕрсе, красноармеецсем фашистсене вăрмантан хĕссе кăларнă. Нимĕçсем пĕтĕм артиллерине, 12 танк, боеприпассен складне, вăрланă япаласем тата пулса çитнĕ тырăсене çулса тиенĕ лавсене пăрахса хăварнă.

* * *

Капитан Шкварцев ертсе пыракан кавалери чаçĕ Германипе Румыни тылне шалах кĕрсе кайнă. Оккупацленĕ Т. ятлă ялта Румыни роти çине сасартăк пырса тапăннă, совет кавалерисчĕсем Румынин 82 салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă тата П. ятлă юханшыв урлă çĕнĕрен хывнă икĕ кĕлепе взрыв туса çĕмĕрнĕ. Каялла тарнă чухне продовольстви тата боеприпассем тиенĕ тăватă обоза ярса илсе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем нимĕçсен аэродромĕсемпе авиабазисене ăнăçлăн çĕмĕрсе тăкаççĕ. Партизансен «Красный сокол» отрячĕ çакăн çинчен пĕлнĕ: вăрманти уçланкăра, С. ятлă хуларан 15 километрта, нимĕçсем аэродром организацленĕ, унта вĕсен самолечĕсем тăраççĕ. Партизансем аэродрома темиçе кун хушши сăнанă. Аэродромри нумай самолетсем горючисĕр тăнă вăхăтра партизансем аэродром çине пырса тапăннă. Вĕсем аэродром таврашĕнчи вăрмана вут чĕртсе янă. Пушар çийĕнчех пит пысăк территорие çавăрса илнĕ. Аэродром охранин пĕр пайĕ пушар сӳнтерме тытăннă. Çакăнпа усă курса партизансем аэродрома пырса кĕнĕ те фашистсен 15 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Колхозăн председателĕ К. ялташ ертсе пыракан партизансен утлă отрячĕ тăшман тылĕнче пысăк çитĕнӳсем тăвать. Партизансем фашистсенчен танкетка туртса илнĕ, унпа тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте чаплăн усă кураççĕ. Тракторист Сердюков ялташ çĕнĕ специальноçа вĕренсе алла илнĕ, вăл чаплă танкист пулса тăнă. Çак кунсенчех партизансен отрячĕ противник аэродромне пырса атакăланă. Летнăй тата технически составăн палатисем çине тăтăшах персе тăрса, партизансем самолетсем çине бензин тултарнă бутылкăсем ывăтнă, çапла майпа 4 машинăна çунтарса янă. Аэродромра фашистсен летчикĕсемпе салтакĕсем 18 çын вилнĕ.

* * *

Голланди халăхĕ фашистла пусмăрçăсене хирĕç кĕрешессине кунран-кунах вăйлатса пырать. Нимĕçсем ярса илнĕ чи пысăк вырăнта тăракан çар завочĕсем продукцие çурри таран çеç хăлараççĕ тата юрăхсăр хĕçпăталсемпе боеприпассем нумай туса кăлараççĕ. Чылай предприятисенче забастовкăсем пуçланса кайнă. Рабочисем Германи çарĕ валли панă заказсене пурнăçа кĕртессинчен пăрăнаççĕ. Голландири халăхсем Германие турпулсем, çу таврашсем тата фруктсем турттарса каяссине пур майпа та чăрмантараççĕ. Продовольстви илсе каякан поездсене час-часах крушенисем пулаççĕ. Германин Голландири влаçĕсем «вырăссен тискерлĕхĕ» текен суя ӳкерчĕксене татăклăнах пичетлесшĕн пулман. Çакна хирĕç ответлесе нимĕç фашисчĕсем хаçатсем çине пысăк штрафсем хунă, хаçатсене хупассипе, редакторсене арестлессипе хăратнă.

* * *

Германи фашисчĕсем чурана кĕртсе ӳкернĕ Чехословакн халăхне нихăçан пулманла асаплантараççĕ. Çак кунсенчех Кладно хулинче нимĕçсем 27 металлистпа горняка персе вĕлернĕ, вĕсене забастовкăсем организациленĕ çĕре хутшăннăшăн вĕлернĕ. Çĕршер рабочисене шахтăсене ăсатнă, вăл шахтăсенче каторгăри пек режим туса хунă. Рабочисем çĕр айĕнче 18 сехет таран ĕçлеççĕ. Нормăсене тултарман горняксене тĕрлĕ майпа асаплантараççĕ, вĕсене высă усраççĕ тата нимĕн те сывратмаççĕ. Çавăн пек пурнăçа тӳсейменнипе хăшпĕр рабочисем хăйсене хăйсем вĕлереççĕ. Вĕсенчен пĕри, Кладно хулинчи металлурги заводĕнче ĕçленĕ рабочи Станек çыру хăварнă, унта çапла çырнă: «Нимĕçсем темĕнле тискер ĕçсем тусан та, чехсем нихăçан та чурасем пулман тата пулас та çук. Пире хĕнеççĕ, çемьесемсĕр, çимĕçсĕр тăратса хăваращ, анчах та Чехословакия фашистла сыснасем умне чĕркуçленсе ларас çук». Нимĕçсен тискерлĕхне пăхмасăрах, Чехословакире тăтăшах забастовкăсем тăваççĕ. Июль уйăхĕн иккĕмĕш суруйăхĕнче поездсене 11 хутчен крушени тунă. Пĕр пысăк крушени вăхăтĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем 250 çын ытла вилнĕ.

* * *

Фашистла тылсем витĕр хăйĕн чаçĕ патне çитнĕ политрук Игнатов гитлерла захватчиксен тĕлĕнмелле çĕнĕ тискерлĕхĕ çинчен каласа панă.

М. местечкинче нимĕçсен чаçĕсем çине çуртйĕр çийĕсенчен персе тăнă пулнă. Çийĕнчех ачасемпе стариксене ялсовечĕ патне пухнă. Урса кайнă фашистсем мĕнпур ачасемпе стариксене чиксе-касса вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах Совет çĕршывĕнчи предприятисенче профессисене вĕренсе алла илсе ĕçлесси анлăн сарăлса пырать. Новомосковски жестекатальнăй заводри слесарь Лысенко ялташ фронта кайнине уляштарса, автогенщик профессине вĕренсе алла илнĕ. Авторемонтнăй заводри рабочи Кондашев ялташ прес тата фрезернăй станок çинче ĕçлет, вăл икĕ профессине те чаплăн вĕренсе çитнĕ. Свободный хулинчи вагонсем юсакан заводри токарь Фомичев ялташ хăйĕн станокĕ çинче нормăна 350 процент тултарать тата çав вăхăтрах слесарь пулса ĕçлет. Н-ски заводри вальцетокарнăй цехăн крановщикĕ Агафонов ялташ шорник, смазчик тата слесарь-электрик профессисене вĕреннĕ, халĕ вăл кран патĕнче ĕçлет, трансмиссисене çу сĕрет, динамо машинăпа моторсен ĕçне тĕрĕслесе тăрать. Чкаловскинчи паровозсем юсакан заводри механически цехăн токарĕ Захаров ялташ слесарь ĕçне лайăх вĕреннĕ, халĕ вăл хăй, слесарьсене чĕнмесĕрех, станока пĕчĕк ремонт тăвать. Васкавлă заказа пурнăçа кĕртнĕ чухне Захаров ялташ пĕр кун хушшинче нормăна 1.340 процент тултарнă. Адыгейри Фрунзе ячĕпе тăракан завод слесарĕ Янит ялташ пĕр вăхăтрах электромонтер ĕçĕсене те туса пырать. Новочеркасски сăрт-ту оборудовани завочĕн слесарĕ Ражанович ялташ фронта кайнă наладчик вырăнне ĕçлет.

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН ХИСЕПЛĔ ЫВĂЛĔ

ЭЛЕК, июлĕн 31-мĕш. (Телефон тăрăх, хамăр корр.). Мăн Тукташри Тарас Павловăн ывăлĕ Петр Павлов Ураскилтри туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Унтан вăл Çĕмĕрле комбиначĕ çумĕнчи ФЗУ шкулне вĕренме кайнă. Квалификаци илнĕ хыççăн вăл комбинатра ĕçленĕ.

1938 çулта Петр Павлов действительнăй службăна Хĕрлĕ Çара кайнă. Хăйĕн службине пурăнса ирттернĕ хыççăн Хĕрлĕ Çара ĕмĕрлĕхех юлма кăмăл тунă. Халĕ вăл фронтра Германи фашизмне хирĕç çапăçать.

Старший сержант, стрелок-радист Павлов çинчен политрук Каунин юлташ фронтри хаçатсенчен пĕринче çапла çырать:

«Подразделени задани илнĕ. Самолетсем пĕлĕтрен сӳле хăпарса цель патне пырса çитнĕ. Противник çине бомбăсем пăрахма пăнă заданине пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, самолетсем каялла çаварăннă. Çĕр çинче белофинсен çĕмĕрлесе пĕтнĕ эшелонĕсен ишĕлчĕкĕсем, çунакан объектсем курăннă. Каялла тавăрăнакан сталинла соколсен хăюллă звени çине фашистсен «Мессершмитт-109» йышши истребителĕсен икĕ звени пырса тапăннă. Советăн хăюллă летчикĕсем фашистсен атакине хăйсен çирĕп стройĕпе тата хаяр вутçулăмĕпе кĕтсе илнĕ. Тăшман чăтса тăрайман, хăйĕн маневрне улăштарнă.

Противникăн истребителĕсем бомбардировщиксен паттăр экипажĕсем çине пиллĕк хутчен пырса тапăннă. Акă пĕри Дуболазов лейтенантăн машини патне вăрттăн пынă, анчах унпа юнашар машинăри стрелок-радистăн комсомолец Павлов юлташăн çывăх куçĕсем фашист маневр тунине асăрхаса илнĕ. Павлов комсомолец пулеметран пĕр черет кăларса янă, çавăн хыççăнах фашистла çăхан çĕр çине чул пек таласа аннă.

Урса кайнă фашистсем совет самолечĕсем çине татах темиçе хут атакăлама хăтланса пăхнă, анчах вĕсем пурте ăнăççăр пулнă. Пирĕн соколсем фашистсен икĕ самолетне стройран кăларнă. Тăшманăн ытти истребителĕсем каялла çаварăнса тарнă.

Павлов юлташ çапла калать:

— Тăшманăн вунпилĕк самолечĕсене персе антарни, вĕсене хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен пĕтĕм хастарлăхпа çапăçни — çакă вăл мана воспитани парса ӳстернĕ совет халăхĕ умĕнче, ленинла-сталинла комсомол тата юратнă çулпуç Сталин юлташ умĕнче эпĕ тăвакан пархатарлă ĕç пулĕ».

Петр Павлов хăйĕн тăванĕсем патне янă сырăвĕсенче шĕлтернĕ тăрăх, отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа июлĕн 14-мĕшне çитиччен вăл 10 хут боевой вĕçевсем туса, тăшмансене хирĕç çапăçнă.

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа хастарлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăçалхи июлĕн 22-мĕшĕнче кăларнă Указпа старший сержант Петр Тарасович Павлов юлташа, Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ сыннине, Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă.

Мăн Тукташ колхозникĕсем хăйсен землякĕпе, отечественнăй вăрçăн паттăрĕпе — орденоносец Петр Павловпа тивĕçлипех мухтанаççĕ. Вĕсем колхозра мĕнпур хастарлăхпа ĕçлесе, гитлерла бандăна çĕмĕрсе тăкас ĕçре хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăтса пыраççĕ.

Ив. МОСЕЕВ.

Совет патриоткисен чыслă ĕçĕ

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ фашистла ирсĕрсене хирĕç геройла çапăçнă кунсенче, мĕнпур совет халăхĕ пĕр шухăшпа—фашистла ирсĕрсене таптаса лапчăтас шухăшпа пурăннă вăхăтра пирĕн мĕнпур вăя, мĕнпур ĕçе, пирĕн мĕнпур пултарулăха фронта пулăшма мобилизацилеççĕ.

Хĕрлĕ Хĕресĕн вунпилĕк пин дружницисем хăйсен пĕлĕвĕсемпе тылра усă кураççĕ. Вĕсем хуласемпе ялсенче, предприятисенче, транспортра, шкулсенче вахтăсенче тăраççĕ.

Çак активисткăсен бомбăсем ӳкнипе, тĕрлĕрен пушарсем пулнипе, ишĕлсе аннипе тата ытти инкек-синкексене пула аманнă çынсене малтанхи пулăшу пама пĕлӳ çителĕклĕ. Вĕсем чирлĕ тата аманнă çынсене пăхмалли правилăсене пĕлеççĕ, кирлĕ пулсан госпитальсене пырса, медицина сестрисен чи çывăх помощникĕсем пулса тăраççĕ.

ССР Союзĕн Хĕрлĕ Хĕрес тата Хĕрлĕ Çуруйăх обществисен союзĕ халĕ санитари дружинисене çĕнĕрен организацилес тата производствăран уйăрмасăр кĕске программа тăрăх дружницăсем хатĕрлес ĕçе сарса пыраççĕ. Вăтам шкулсенчи 9, 10-мĕш классенче вĕренекен хĕрачасенчен ятларах шкулсенчи санитари дружинисене организацилеççĕ.

Медицина сестрин профессийĕ—вырăс хĕрарăмĕн авалхи çар профессийĕсенчен пĕри. Медицина сестрисем тăван çĕршыва хӳтленĕ чухне хăйсен героизмне, пултарулăхне кăтартрĕç. Вĕсене пирĕн халăх юратать.

Совет халăхĕ Германин урса кайнă фашисчĕсене хирĕç отечественнăй вăрçăра çапăçнă вăхăтра фронт тата тыл валли медицина сестрисем çителĕклĕ пулччăр тесен, тĕрлĕрен профессиллĕ медсестрасен çĕнĕ кадрĕсем кирлĕ. Сестра-наркотизаторсем, гипсовальщицăсем, рентгенотехниксем, лаборантăсем, массажисткăсем, сестра-хозяйкăсем т. ыт. те кирлĕ.

Мухтавлă ленинла-сталинла комсомол çак профессисене вĕренме çамрăк хĕрсене явăстарать. Çĕршер тата пиншер хĕрсем-студенткăсем запаспа гăракан медицина сестрисен пĕлӳлĕхне илестĕн. Вĕсем валли аслă шкулсем сумĕнче курссем уçаççĕ. Çакăнпа пĕрлех запаспа тăракан медицина сестрисен курсне килхуçи хĕрарăмсене, вăтам шкулсенче вĕренекенсене, 7 класра вĕреннĕ чухлĕ пĕлӳ илнисене явăстараççĕ. Сестрасен курсĕсене пысăк предприятисенче тата ялсенчи врач участокĕсенче тăваççĕ.

Пирĕн тăван çĕршыври çĕршер пин патриоткăсем фронта тата тыла пулăшма тăрăшаççĕ. Харьков хулинче отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех 1500 хĕрарăм хăйсене санитари дружини ретне илме е медицина сестрисен курсне вĕренме яма ыйтса заявленийсем панă. Ытти хуласенче те çавнашкалах.

Кучухнехи, фронтпа тыл хушшинче чикĕ пулман вăрçăра кашни çынăн хăйне е бомбăсем пăрахнинчен, пушар пулнипе, ишĕлсе аннипе тата ытти çăлтавсене пула аманнă çынсене малтанхи пулăшу пама тӳрĕ килме пултарать. Çавна май ĕçсыннисен сарлака сийне харпăрхăйне тата ыттисене пулăшмалли правилăсене (ГСО комплексĕ тăрăх) вĕрентесси пуçланать. Çакăн пек тумалла: **кашни çемьере пĕр çын та пулсан санитари ĕçне, малтанхи пулăшу пама вĕрентĕр.**

Хĕрлĕ Хĕрес тата Хĕрлĕ Çуруйăх организацийĕсем халĕ ĕççыннисене донорсен ретне явăстарас тĕлĕшпе массăллă кампани ирттереççĕ. Ятарласа «Донор Красного Креста» звани тунă.

Донорсем—хиселлĕ геройсем, вĕсем чирлĕ тата аманнă боецсен гуриăçне çалас тĕлĕшпе юн яма хăйсен юнне параççĕ.

Сикекен чирсем тата эпидеми—тăшманăн помощникĕсем. Вĕсем ĕççыннисен сывлăхне хавшатаççĕ, тыла вăйсăрлатаççĕ. Пур çĕршывсенче те вăрçă вăхăтĕнче эпидемисем пысăк сиен кӳнĕ, халăх нумай вилнĕ. Пирĕн задача, пĕтĕм халăхăн задачи—массăллăх чирлесенне пĕтересси пулать. Тасалăхшăн, санитари культуришĕн пыракан движенине аталантарса пымалла.

Советăн санитари обороннине пуçаннă миллионшар патриоткăсем пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çаран тылне çирĕплетме пулăшĕç, Германи фашизмне—пĕтĕм этемлĕхĕн тăшманне çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшĕç.

С. КОЛЕСНИКОВ.
СССР Хĕрлĕ Хĕрес тата Хĕрлĕ Çуруйăх Обществисен Сĕвĕн Исполком председателĕ.

Тăван çĕршыв мухтавĕшĕн

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 29-мĕш. (ТАСС) М. районĕнче тăшмал шыв урлă каçма хатĕрленсе тăнине çĕмĕрсе тăкма командованичен задани илнĕ. Старший лейтенант Попов самолечĕ çине тăшман çавтери вăйлăн персе тăнă. Тăшманшăн шыв урлă каçни питĕ кирлĕ пулнă. Çавăнпа та вăл ăна пĕтĕм вăйпа хӳтленĕ, нимĕн те хĕрхенмен. Сывлăшра тĕтĕм çĕкленсе пĕлĕтпе пĕрлешнĕ. Самолет çине шрапнель çуса тăнă. Снарядсем çурăлса кайнă хум машинăна сулкалаланă. Стрелок-радист Сукачевский хăй аманнине çинчен пĕлтерет. «Поста пăрахмастăп» тесе хушнă вăл. Поповăн сылтăм алли тăрăх юн юхнă. Анчах, ыратнине чăтса, сулахай алăпа ĕçленĕ, машинăна çирĕп тытса пынă. Бомба пăрахма машинăн хăвăртлăхне, çула тата çӳлĕшне тĕрĕс тытса пымалла пулнă.

Шыв хĕрринче фашистсен пехоти, танкĕсем, обозĕсем, бронемашинисем пухăнса тăнă. Бомба вĕсен варрине пырса ӳкнĕ. Çулăм çĕкленнĕ, вĕсемпе пĕрле — машина çĕмĕкĕсем, çынсемпе лаша виллисем сывлăшалла сирпĕнсе.

Танксемпе обозсем ним йĕркесĕр арпашăнса кайнă. Сывлăшри карап çинчи пулемет ĕçлеме тытăннă. Трассировка тăвакан пулясем тăшмана пыра-пыра тивнĕ. Çак вăхăтра Сукачевскине виçĕ хут аманнă. Анчах вăл юнне алăпа шăлса илнĕ те, каллех пеме тытăннă. Самолет экипажĕ хăйĕн геройла ĕçне тунă, вăл зенитчиксем вăйлăн персе тăни çине çавăрăнса та пăхман.

Тăвата «Мессершмитт» вăрмантан вĕçсе тухса пирĕн самолет çине тапăннă. Бензинăн персе шăтарнă бакĕнчен бензин сирпĕнсе юхнă, сылтăм мотор хăрушла шакканă — машина хăйĕн хăвăртлăхне сухатнă. Стрелок тата капитан Евсеев персе, хăйсен карапне хӳтлесе пынă. «Мессершмитт» малалла вĕçсе тухса çунатпине сулать: «Ман хыççăн пырса анса лар».

Тăван çĕршывăн, Сталинăн! — кăшкăрнă совет самолечĕ çинчен. Унтан тăшман çине тĕл персе ответлесçĕ. «Мессершмитт» тĕтĕм кăларма пуçлать: фашистла «асс» тарса пытанма хăтланать. Сукачевский тупăран перет, «Мессершмитт» çĕр çинелле чăмнă.

Анчах Евсеев пулемечĕ ĕçлемест, тăшманăн татах виçĕ истребитель юлнă-ха. Попов ракетницăна кута яма хушать. Çав минутăра старший политрук Герасимов ертсе пыракан совет карапĕ пулăшма пырса çитнĕ: халь ĕнтĕ вĕсем виççĕне хирĕç иккĕн. Вĕсем фашистла летчиксен çапăçас кăмăлне часах пусарнă.

Акă ĕнтĕ геройсем килте. Мотор ĕçлеми пулнă, бакра пĕр тумлам бензин та юлман. Попов самолечĕ аэродромран 100 метр аяккарах анса ларнă. Вăл кабинăран тухса командира çапла калать:

— «Приказа пурнăçланă, бомбăсене тĕл пăрахрăмăр — тăшман шыв урлă каçассине çĕмĕрсе тăкнă».

Пĕтĕм вăя—фашизма çапса салатма!

Патриотла туйăмпа хавхаланса çĕкленнĕ совет çыннисем юнлă фашизма хирĕç паттăрăн çапăçакан Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшса пыраççĕ. Вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене тата Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине те срокчен парса татаççĕ.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне ĕççыннисем хушшинче сарма тытăннă кунранпа, колхозниксемпе единоличник хуçалăхĕсем заемпăн 2768 пин тенкĕ укçа пухса панă. Заем укçи пухасси уйрăмăнах Сĕнтĕр, Комсомольски, Вăрнар, Елчĕк районĕсенче ăнăçлăн пуласа пынă. Июль уйăхĕн малтанхи икĕ кунăкунлăхĕнче Сĕнтĕр районĕнчи колхозниксем заемпăн 61 пин тенкĕ, Комсомольскипе Вăрнар районĕсем 54-шер пин тенкĕ пухса перекет кассине пырса хывнă.

Заем укçине срокран маларах парса татассишĕн республикăри ытти районсенче те агитацине массăллă ĕçе çине тăрсах туса пымалла. Çитĕнӳсем çинче пĕр самантлăха та лăпланса ларма юрамасть. Çĕршыв обороннине тĕреклетме мĕн кирлисене пурне те вăхăтра парса тăрар!

Ф. МИРОНОВ.

Патриотсем

Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ чĕннине Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи инженерно-технически работниксем, служащисем хăйсен ĕçне лайăхлатнипе, ĕç дисциплинине çирĕплетнипе, çар ĕçне вĕренессине пăхăлатнипе ответлеççĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи работниксем хăйсене халăх ополченийĕн ретне илме ыйтса заявленисем пачăç, вĕсен шутĕнче хĕрарăмсем 20 çын. Ополчени ретне çыранлисен шутĕнче ялхуçалăх ĕçĕн тата специалисчĕсем: Мочалов, граждан вăрçин участникĕ Осанов, Косминский, бухгалтер Щепелев юлташсем пур.

Хĕрарăмсем те çар ĕçне пысăк хавасăлхпа вĕренеççĕ. Медицина сестрисен шкулĕнчен 38 çын вĕренсе тухнă, санитари дружини тунă. Лопашева, Егорова, Серякова тата Селивестрова юлташсем çар ĕçне уйрăмах тăрăшса вĕренеççĕ. Хĕрарăмсене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе коммунисткăсем Быренко тата Ягодкина юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ф. СМИРНОВ.

Революциллĕ сыхăлăхшăн, организацилĕхшĕн, йĕркелĕхшĕн

Оборонăн Государственнăй Комитечĕ, аслă Сталин пирĕн пĕтĕм халăха Ленин—Сталин партийĕ тавра, Совет правительстви тавра татах та ытларах пĕтĕçме, нимĕçсен фашистла войскисене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота пĕтĕм вăйран пулăшма чĕнчĕç. Хăватлă, нумай миллионлă пĕтĕм совет халăхĕ таса отечественнăй вăрçа çĕкленчĕ.

Тăшман вăйлă, хаяр та ултавлă. Вăл питех те вăйлăн хĕçпăшалланнă.

Çавăнпа та пирĕн мĕнпур вăйсене тăшмана çĕмĕрсе тăкас çĕре мобилизацилемелле, çавăнпа та Сталин юлташ пире пурне те «хамăрăн мĕнпур ĕçе хăвăрт вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетме, пурне те фронт интересĕсене тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас задачăсене пăхăнтарма» чĕнчĕ.

Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç, çĕнтерӳ пирте пуласси пирки эпир нимĕн те иккĕленместпĕр.

Пулса тăнă чрезвычайнăй положени кашни гражданинран, кашни гражданăкаран хастарлăх, хăюллăхпа паттăрлăх, пысăк организацилĕх, сыхăлăх, йĕркелĕх ыйтать.

Большевикла хастарлăх, чăтăмлăх, тимĕр пек çирĕп, ăнлануллă дисциплина, тăшмансем тĕлĕшпе революциллĕ сыхăлăхлă пулни, вĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе тăкни тата туса хунă йĕркене çирĕппĕн пăхăнса тăни—çаксем вĕсем тăшмана çĕмĕрсе тăкма кирлĕ условисем пулса тăраççĕ.

Рабочисемпе работницăсем, колхозсемпе колхозницăсем, совет интеллигенчĕсем хушшинче ĕçре халиччен пулман çĕкленӳ—пирĕн халăхăн организованноçне, унăн мобилизациллĕ хатĕрлĕхне чаплăн кăтартса параканни пулса тăрать.

Вăрçă вăхăтĕнчи обстановка тылри мĕнпур предприятисене вăйлăн ĕçлеме хушать. Пур çĕрте те йăвашчунлăхпа тимсĕрлĕхе тĕп тумалла, вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек, хăвăрт, тĕрĕс ĕçлемелле, çӳлте тăракан çынсен распоряженийĕсемпе заданийĕсене тĕрĕс тата хăвăрт пурнăçа кĕртмелле, государство дисциплинине çирĕппĕн пăхăнса тăмалла.

Пирĕн тылри боевой ĕçе пăсакансем тĕлĕшпе имĕнле каçару та пулмалла мар. Ирсĕр тăшман чее те сĕмсĕр. Вăл пирĕн шанчăка хуçас тĕлĕшпе, халăх хушшинче паника сарас тĕлĕшпе мĕнпур вăйсемпе тăрăшать. Суя хыпарсем, паникăлла сăмахсем сарас, провокаци тăвас шутпа вăл нимĕнле средствăсем умĕнче те чарăнса тăмасть. Ун çинчен пĕр минутăлăха та манма юрамасть, тăшман ултавĕ хыççăн тем тусан та каймалла мар! Паникерсемпе хăравçăсене, провокаторсене, суя сăмахсем сараканă сынсене çийĕнчех тытса, вĕсене, тăван çĕршыв тăшманĕсем вырăнне шутласа, çар трибуналĕн сучĕ аллинне памалла.

Тăшман тарçисом—шпионсемпе диверсантсем, вăрттăн майсемпе ĕçлесе, электростанцисене, çыхăну узелĕсене стройран кăларма, кĕпersене, складсене взрыв туса çĕмĕрме тăрăшаççĕ, вĕсем пирĕн войскăсем пĕр вырăнтан теĕпĕр вырăна куçни çинчен, хĕçпăшалсем, продовольствисем тăратни çинчен сведенисем пухма тăрăшаççĕ т. ыт. Заводсене, электростанцисене, чугун-çулсене, телефонпа телеграф сыхăнусене сыхласа тăрассине организацилемелле. Тăшман мĕн чухлĕ сĕмсĕртерех тата чеерех, эпир революциллĕ сыхăлăха, асăрханулăха, вичкĕнлĕхе татах та темиçе хут ытларах ӳстеретпĕр, фашистла лазутчиксене нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе тăкатпăр.

Совет çыннисен чăн-чăн революциллĕ сыхăлăхĕ çинчен пирĕн хаçатсенче пĕр хут çеç мар çырчĕç. Совет железнодорожникĕсемпе сыхăну ĕçĕнче ĕçлекенсем çавăн пек сыхăлăхăн чаплă тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ. Тăшман чи малтанах сыхăнупа транспорта дезорганизацилеме тăрăшнине вĕсем пĕлсех тăраççĕ. Н. станцийĕнчи дежурнăй патне пĕр милиционер кĕнĕ. Вăл ăшă кăмăлпа сывлăх суниа паллашнă хыççăн депова ăстан каймалли çинчен ыйтнă. Дежурнăй Сидоров юлташ депо патне каймалли çула кăтартнă. Анчах та хăй палламан çынна сăнама тытăннă. Лешĕ, йĕриташа пăхкала-пăхкала, депона кĕрсе кайнă. Сидоров юлташ чугунçул çинчи милици отделенине телефон тăрăх пĕлтернĕ. «Милиционер» диверсант пулнă.

Тепĕр факт. Икĕ диверсант, совет железнодорожникĕсен формине тумланăскерсем, поезд çинчи çемçе вагон ăшĕнче пынă. Проводник Сливкин юлташа çав пассажирсем иккĕлентернĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсене паллатарасшăн пулман. Сливкин юлташ çакăн çинчен чугунçул çинчи милици представительне пĕлтернĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн Сливкин юлташ иккĕленни тĕрĕс пулнă—«железнодорожниксем» фашистсен агенчĕсем пулнă.

Пирĕн Хĕрлĕ Çарпа совет разведкин органĕсене ачасем те пулăшаççĕ. Чугуçул каçакан пĕр пысăк кĕпер тавăтăм шкулсенче вĕренекенсене, 7 класра вĕреннĕ чухлĕ пĕлӳ илнисене явăстараççĕ. Сестрасен курсĕсене пысăк предприятисенче тата ялсенчи врач участокĕсенче тăваççĕ.

Пирĕн тăван çĕршыври çĕршер пин патриоткăсем фронта тата тыла пулăшма тăрăшаççĕ. Харьков хулинче отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех 1500 хĕрарăм хăйсене санитари дружини ретне илме е медицина сестрисен курсне вĕренме яма ыйтса заявленийсем панă. Ытти хуласенче те çавнашкалах.

Кучухнехи, фронтпа тыл хушшинче чикĕ пулман вăрçăра кашни çынăн хăйне е бомбăсем пăрахнинчен, пушар пулнипе, ишĕлсе аннипе тата ытти çăлтавсене пула аманнă çынсене малтанхи пулăшу пама тӳрĕ килме пултарать. Çавна май ĕçсыннисен сарлака сийне харпăрхăйне тата ыттисене пулăшмалли правилăсене (ГСО комплексĕ тăрăх) вĕрентесси пуçланать. Çакăн пек тумалла: **кашни çемьере пĕр çын та пулсан санитари ĕçне, малтанхи пулăшу пама вĕрентĕр.**

Хĕрлĕ Хĕрес тата Хĕрлĕ Çуруйăх организацийĕсем халĕ ĕççыннисене донорсен ретне явăстарас тĕлĕшпе массăллă кампани ирттереççĕ. Ятарласа «Донор Красного Креста» звани тунă.

Донорсем—хиселлĕ геройсем, вĕсем чирлĕ тата аманнă боецсен гуриăçне çалас тĕлĕшпе юн яма хăйсен юнне параççĕ.

Сикекен чирсем тата эпидеми—тăшманăн помощникĕсем. Вĕсем ĕççыннисен сывлăхне хавшатаççĕ, тыла вăйсăрлатаççĕ. Пур çĕршывсенче те вăрçă вăхăтĕнче эпидемисем пысăк сиен кӳнĕ, халăх нумай вилнĕ. Пирĕн задача, пĕтĕм халăхăн задачи—массăллăх чирлесенне пĕтересси пулать. Тасалăхшăн, санитари культуришĕн пыракан движенине аталантарса пымалла.

Советăн санитари обороннине пуçаннă миллионшар патриоткăсем пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çаран тылне çирĕплетме пулăшĕç, Германи фашизмне—пĕтĕм этемлĕхĕн тăшманне çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшĕç.

С. КОЛЕСНИКОВ.
СССР Хĕрлĕ Хĕрес тата Хĕрлĕ Çуруйăх Обществисен Сĕвĕн Исполком председателĕ.

Пĕтĕм вăя—фашизма çапса салатма!

Патриотла туйăмпа хавхаланса çĕкленнĕ совет çыннисем юнлă фашизма хирĕç паттăрăн çапăçакан Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшса пыраççĕ. Вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене тата Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине те срокчен парса татаççĕ.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне ĕççыннисем хушшинче сарма тытăннă кунранпа, колхозниксемпе единоличник хуçалăхĕсем заемпăн 2768 пин тенкĕ укçа пухса панă. Заем укçи пухасси уйрăмăнах Сĕнтĕр, Комсомольски, Вăрнар, Елчĕк районĕсенче ăнăçлăн пуласа пынă. Июль уйăхĕн малтанхи икĕ кунăкунлăхĕнче Сĕнтĕр районĕнчи колхозниксем заемпăн 61 пин тенкĕ, Комсомольскипе Вăрнар районĕсем 54-шер пин тенкĕ пухса перекет кассине пырса хывнă.

Заем

Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ

ÇЕМЕРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри пур шкулсенче те çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси пысăк хăвăртлăхсемпе пырать. Кашни шкул вĕренӳ çулĕ пуçланиччен туса пĕтермен ĕçсене вĕçлессишĕн, вĕренме пыракансене ăшшăн кĕтсе илессишĕн тăрăшса ĕçлет. Ку тĕлĕшпе шкулсене учительсем пысăк пулăшу параççĕ.

Пояндайкинри туллимар вăтам шкулта 7 класс пулать, унта пĕтĕмпе 185 ача вĕренмелле. Классенче партăсем çителĕклĕ. Вĕренӳре кирлĕ нагляднăй пособисем те чылай илнĕ. Çак кунсенчех кăмакасене те юсаса пĕтереççĕ. Шкул валли 50 кубла метр вутă хатĕрленĕ.

— Эпир чи кирлĕ тата пысăкрах ĕçсене туса пĕтертĕмĕр. Кăçал пирĕн учительсем те çителĕклĕ, халĕ вĕсем пурте шкулта, вĕсенчен хăшпĕрисем çуркуннехи тĕрĕслӳ испытанинче иккĕмĕш хут испытани тытма хăварнă ачасем хушшинче ĕçлеççĕ,—тет шкул директорĕ С. Макаров юлташ.

Анат-Кăмашари вăтам шкулта та (директорĕ Михайлов юлташ) вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Сăмахран, 260 кубла метр вутă хатĕрленĕ, вăл шутран 130 кубла метр турттарнă та ĕнтĕ, çĕнĕрен 3 доска тунă, партăсене юсанă, кăмакасоне тӳрлетеççĕ т. ыт. те.

Вăрманти колхозсен ялсоветĕнчи тулlimар вăтам шкулта иртнĕ çулсенче вĕренӳ кабинечĕсем çителĕксĕр тата тăвăр пулнă. Кăçал «Красный Октябрь» колхоз ăна 3 класс валли çурт пачĕ, вăлах 200 кубла метр вутă турттарса пачĕ. Кунта шкул завхозĕ Кошкин юлташ уйрăмах тăрăшса ĕçлет. Вăл тăрăшнипе паянхи куна партăсене, доскасене т. ыт. класри япаласене юсаса хатĕрленĕ.

Хутарти вăтам шкула кăçал ремонт тума палăртнă. Çавна валли 100 кубла метр ытла йывăç хатĕрленĕ, ăна çурса хăмасем тума учительсен вăйăпех вăрман заводне турттарнă. Кунта учительсем шкулти ытти ĕçсене те активлăн хутшăнаççĕ.

Хулари шкулсенче те вĕренӳ çулне хатĕренес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем тăваççĕ. 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта пур классене те тасатса йĕркеленĕ, халь коридорсене сăрлаççĕ. Вĕренекенсем валли литературăсем, тетрадьсем çителĕклĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен спортплощадкăна та йĕркелесе çитермелле. Унта волейбольнăй, баскетбольнăй площадкăсем, гимнастика тумалла городок, сикмелли вырăнсем пулаççĕ.

Иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкул директийĕ (директорĕ Доксубаев юлташ) çуркуннехи испытанисем пулса иртнĕ хыççăнах çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăннă. Шкул валли вĕренӳ программи тăрăх кирлĕ япаласене тупса çитернĕ. Кăçал кăна вăл литература, вырăс чĕлхи т. ыт. предметсем валли 70 комплект диапозитив, проекционнăй фонарь, географи, ботаника, анатоми атласĕсем 10 штука, карттăсемпе тĕрлĕрен коллекцисем илнĕ, шкул библиотекине 1600 тенкĕлĕх литература илсе пуянлатнă. Вĕренекенсенчен 70 процентĕ ытла кивĕ учебниксене сутса хăйсене кирлĕ кĕнекесем туяннă.

Хальхи вăхăтра учительсем хăйсене çирĕплетсе панă урамсенче шкул çулне çитнĕ ачасене учета илес тĕлĕшпе тата кĕркуннехи испытанине хăварнă ачасем хушшинче ĕçлеççĕ, шкулта ятарласах консультаци организацилеççĕ.

* * *

Районри учительсемпе вĕренекенсем социализмлă промышленноçа, транспорта тата колхозсене пысăк пулăшу параççĕ. Хулари пĕрремĕш номерлĕ шкулти учительсемпе вĕренекенсем пĕр кун чугунçул çинче тата темиçешер кун Етĕрнери «Ямоз» çу завочĕн складĕнче тата ытти çĕрте ĕçленĕ. Кун пек ĕçсене хулари ытти шкулсенчи учительсемпе вĕренекенсем те хутшăнă. Хутарти тата Анат-Кăмашари учительсем темиçешер кун киле тавăрнăсăр ĕçлерĕç, халĕ вĕсем вĕренекенсемпе пĕрле колхоз производствинче ĕçлеççĕ.

Районри учительсенчен, пурте тенĕ пекех, сывлăшран килсе тапăнсан сыхланма ĕççыннисене вĕрентес тĕлĕшпе Осоавиахимăн райсовечĕ организациленĕ курсран вĕренсе тухнă. Халхи вăхăтра вĕсем колхозсенче ĕçлеççĕ. «Новая жизнь» колхозра акă кашни бригада çумнех учительсем çирĕплетнĕ 5-мĕш бригадăра—Арисов, 3-мĕшĕнче—Улисова, 6-мĕшĕнче—Макаров юлташсем, колхозниксене сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма вĕрентнисĕр пуçне, агитациллĕ-массăллă ĕçе те начар мар организациленĕ. Вĕсем колхозниксене час-часах хальхи лару-тăру çинчен, Совет Информаци Бюровĕн сводкисене вуласа ăнлантарса параççĕ.

Кăмашари вăтам шкулта вĕрентекен Павлов юлташ вĕренӳ çулĕ пуçланичченех колхоз производствинче ĕçлеме кăмăл турĕ. Халĕ вăл чăнах та колхозра пример кăтартать. Аслă классенче вĕренекенсем Егоровпа Андреев колхоз уйхирне сыхлама пулчĕç. Ку шкулта вĕренекенсемех колхозра çум çумлас, утă çулас тата уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Уборка вăхăтĕнче хулари учительсемпе вĕренекенсем те колхозсене пулăшма каяççĕ. 1-мĕш номерлĕ шкултан кăна 40 ача каять. Кашни вĕренекен, кашни учитель халь пĕр шухăшпа — социализм строительствин хуть те хăш участокĕнче те лайăхран та лайăх ĕçлесе, тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас шухăш-кăмăлпа пурăнать.

Хар. ЛИСИН.

П. Мальков художникăн ӳкерчĕкĕ. («Искусство» Издательстви кăларакан плакатран тунă репродукци).
ТАСС фото-хроники.

Çĕнĕ трактористкăсем

ЕТĔРНЕ. Çĕршыври пĕллĕ трактористкăсем Паша Ангелина тата Паша Ковардак 1939 çулта Совет Союзĕнчи патриоткăсене чĕнсе çапла çырнăччĕ:

«Тăван çĕршывăн çамрăк патриоткисем, тракторпа ĕçлеме вĕренĕр! Пирĕн пиччесемпе упăшкасем тракторсенчен танксем çине ларсан, эпир вĕсен вырăнне ăшшăнăпăр. Социализмлă уйхирсенче ĕçлесе, тăван çĕршыва пулăшар!»

Халĕ ку вăхăт çитрĕ ĕнтĕ. Пиншер трактористсем тăван çĕршыва юнлă фашистсенчен сыхлама тухса карĕç. Вĕсем вырăнне тракторсем çине арăмĕсем, аппăшĕсем, йăмăкĕсем ларчĕç.

Ф. Горбатова колхозницăн (Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз) упăшки тракторист пулса ĕçленĕ. Горбатова юлташ, иртнĕ çулта хăйĕн упăшкипе пĕрле ĕçлесе, трактор ĕçне вĕренсе юлчĕ. Халĕ унăн упăшки фронта кайнă, вăл упăшки вырăнĕнче ĕçлет.

Машинно-тракторнăй станци çумĕнче трактористсен курсĕ уçăлнине пĕлсен, районри çамрăк патриоткăсем вĕренме кĕме пытса темиçе заявлени пачĕç.

Курсра вĕренекен 36 çамрăк хĕрачан пурин те пĕр шухăш: хăвăртрах вĕренсе тухса, тракторсем çине ларасси, тăшмана çапса аркатма пулăшасси.

А. СОРОКИН.

Чи шанчăклă ĕмĕт

Сасартăк, тревога янрарĕ ирпе.
Сасартăк, пĕр харăс тăрса,
Эпир вăрман витĕр, сăрт урлă, хирпе
Вĕçертĕмĕр аслă вăрса.
Эпир малтисеммĕр; эпир çĕкленсе
Чăмайрăмăр çулăм ăшне, —
Ак çиçрĕ çанталăк, хĕрсе, чĕтренсе,
Çил шăхăрчĕ: хăшĕ—хăшне! —
Вăл ухă снаряд-мĕн ухлатрĕ çумра,
Ялтан-мĕн сӳ килчĕ хĕрӳ...
Çапах та çав ир-çĕре çуралчĕ чунра
Ыр ĕмĕт — хаяр çĕнтерӳ.
Эпир малтисеммĕр. Юн кӳпнĕ тăшман
Хăй, ирсĕр, юн хăсрĕ çав ир.
—Эпир никама та хальччен парăнман,—
Каларĕ пире командир.
—Хальччен парăнман, парăнассăмăр çук!
—Ман хыççăн! Атака! Вакла! —
Пăшалăмăр хатĕр, вăйăламăр шух.
Шарт сикрĕ тăшман кайăкла;
Вăл чакрĕ, юнпа антăха-антăха,
Ун хыççăн сӳ кайрĕ хĕрӳ...
Эй, шанчăклă ĕмĕт. Хĕрт вилсĕр йăха!
Мухтав, малтанхи çĕнтерӳ!
Пайтах кунсем иртрĕç çиçсе унтанпа.
Пуçламăш çапах та асра:
Е çивĕч хĕçпе, е хĕрӳллĕ вутпа
Тăшман йăванчĕ кашни хăлăçра.
Çап-çамрăк çеçкеллĕ тĕмсем хушшинче
Эп тупрăм юлташăн ӳтне.
Юратнă пăшалĕ выртать çумĕнче,
Хăй лăпкăн çеç ӳкнĕ ӳпне.
Мухтавлăн сан сӳнчĕ, тăван, ĕмĕрӳ:
Выртатăн — ху пăхнă мала...
Чи шанчăклă ĕмĕт — хаяр çĕнтерӳ.
Хытарчĕ вĕри кăмăла.
Чылай кунсем иртрĕç... Пуян хирелле
Фашист ывтать-ха кăвар,
Анчах хĕмпеле сирпĕнет вирелле.
Эпир чурасен йăхĕ мар!
Эпир ирĕк халăх, пĕр харăс тăрса,
Кĕретпĕр вут-çулăм ăшне.
Эпир куç-кĕретĕн калатпăр вăрса:
Ак, курăн-ха: хăшĕ—хăшне!
Чунра сивĕнми вĕрет ырă хĕрӳ,
Пăшал шăпланмасть алăра.
Çав шанчăклă ĕмĕт — хаяр çĕнтерӳ
Çӳрет пирĕнпех вăрçăра.

Александр АЛГА.
Действующи арми.

Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртеççĕ

ЕТĔРНЕ. Колхозсенче чăн-чăн советлă патриотизм движенийĕ кунран-кунах хăватлăн сарăлса пырать. Кашни колхоз, бригада, звено, колхозниксемпе колхозницăсем, шкул ачисем Гитлерăн урса кайнă йыттисене çапса аркатма, социализмлă тăван çĕршыва татах çирĕплетессишĕн кĕрешмĕ хатĕр тăраççĕ.

Кăташирi «Пионер» колхоз 1941 çулшăн аш-какай, сĕт-çу, çăм, çамарта памалли обязательствăсене ытлашшипех тултарнă. Закупка шучĕпе государствăна 3 пине яхăн литр сĕт сутнă. Кăçалхи поставка шучĕпе 64 центнер тырă панă.

Колхозниксем те хăйсен обязательствисене срокченех тултараççĕ. 80 хуçалăх аш-какай, 70 хуçалăх çăмарта парса татнă. Ĕнеллĕ колхозниксем пурте государствăна сĕт парса татнă. Чылай колхозниксем государство умĕнчи парăмсене иртерсе параççĕ. Е. Мальков, С. Федоров, А. Михайлов, С. Пугачев колхозниксем заданиничен иртерсе 20-шер çăмарта панă.

Колхозниксем ялхуçалăх налогĕпе страховка укçисене те срокченех тӳлеççĕ. А. Семяшкин 200 тенкĕ, А. Григорьев 200 тенкĕ, И. Игнатьев 180 тенкĕ, А. Кудряшов 170 тенкĕ ялхуçалăх налогĕ тӳленĕ. Çак кунсенче аванс шучĕпе ялхуçалăх налогне 2 пин тенкĕ ытла пухнă.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине колхозниксем пысăк активлăхпа тӳлеççĕ. Колхоз председателĕ комсомолец С. Данилов кăçал заем уполномоченнăйĕ пулса ĕçлерĕ. Вăл çĕнĕ заема хăйĕн участокĕнче 3 пин тенкĕлĕх сарнă. Хĕрлĕ Çар ретне кайиччен заем укçине 2 пин тенкĕ пухса хăварчă. Çавнашкалах С. Сынков юлташ та Хĕрлĕ Çар ретне кайиччен хăй сарнă заем укçине 50 процент пухнă.

Колхоз уборкăна лайăх хатĕрленет. Утăна пысăк пахалăхпа çулса пухрĕ. Стахановла ĕçлекенсен йышĕ кунран-кунах ӳсет.

Пушнарти Мичурин ячĕпе тăракан, Ирçери «Сура» колхозсем те государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарнă.

Н. ЦВЕТКОВ.

СĔНТĔР. Ярославка ялсоветне кĕрекен колхозниксемпе колхозницăсем тыл çирĕп пулни фашизма хирĕç пыракан çапăçура çĕнтерӳ тума май панине аван ăнланаççĕ. Çавăнпа та вĕсем ăна кашни кунах çирĕплетсе пыма тăрăшаççĕ. «1-ая борозда» колхоз заем укçине 3070 тенкĕ пухнă. 1941 çулшăн государствăна 67 центнер тĕштырă панă.

Колхозниксем ялхуçалăх налогĕпе страховка укçисене срокчен тӳлеме пуçларĕç. Вĕсем кĕске вăхăтрах 5094 тенкĕ тӳленĕ.

«Августăн 1-мĕшĕ» колхоз государствăна 106 центнер тырă, 57 центнер утă панă. «Ударник» колхоз 101 центнер тырă, 89 центнер утă леçсе панă.

Пионерсем те вăй çитнĕ таран Хĕрлĕ Çара пулăшасшăн. Нискассинчи пионерсем пĕр тонна тимĕр-тăмăр пуçтарнă.

И. АРГАНДЕЕВ.

СĔНТЕРВĂРРИ. Чучукассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарса пырать. Колхоз 1941 çулшăн государствăна тырă, аш-какай, сĕт-çу парса татрĕ. Çĕнĕ тырра 1942 çулти плана тултарас шутпа пама хатĕрленет.

Колхозăн утă питĕ вăйлă, ăна çулса капана хывнă. Колхоз 18 тонна силос хывнă тата 40 тонна хывма хатĕрленеççĕ.

Фермăсенче ĕçлекенсем выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. М. Яковлева тата Е. Осипова юлташсем выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн сысна çӳри тата сĕт илчĕç.

Н. ТИТОВ.

Комсомолоцсем ĕçре

Пирĕн заводри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен халĕ пĕр шухăш-кăмăл — производствăра стахановла ĕçлесе, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота пулăшасси.

Юлашки вăхăтра эпир хамăрăн завод территорийĕнче тимĕр-тăмăрсем пухас енĕпе хăшпĕр ĕçсене туса иртертĕмĕр Комсомолецсен вăйăпе 16 тонна ытла металл пухрăмăр тата 0,5 тонна ытла ытти йышши утильсене (çĕтĕк-çатăк, хут татăлăсем, чăпта тавраш-сем т. ыт. те) пуçтартăмăр. Ку ĕçе малашне те туса пыратпăр.

Комсомолецсенчен пурте çар ĕçне вĕренеççĕ, хăшпĕрисем тата хăйсем вĕрентеççĕ. Эпир çак кĕске вăхăт хушшинче 7 комсомолец ПВХО кружокĕнче вĕрентекен тата 5 комсомолкăна ГСО кружокĕнче вĕрентекен инструктор пулма хатĕрлерĕмĕр. Халĕ вĕсем цехсенче, çуртсенче кружоксем организацилесе ĕçе тытăннă.

Комсомолецсем производство планне тултарас тĕлĕшпе те пример кăтартаççĕ. Сăмахран, Ваганов юлташ ертсе пыракан бригада плана ялан 150 процентран кая мар тултарать. Паллă стахановка выпарщица Е. Воробьева, чи ответлă выранта ĕçлесе, кулленхи нормăна иртерсе тултарать. Слесарь Самойлов та ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пример кăтартать.

Юлашки вăхăтра малта пыракан çамрăксем комсомол ретне кĕчĕç. Халĕ вĕсем общественнăй ĕçе активлăн хутшăннă, чылай çамрăксем халăх ополченине кĕме заявленисем панă.

Г. ЕГОРОВ.
Сăмĕрлери «Большевик» заводри ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ.

Хастарлă хĕрарăмсем

ÇĔРПУ. Урпашри «Политотделец» колхозри хĕрарăмсем, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ радио тăрăх туха-тăнă хыççăн, колхоз производствинче нихăçанхинчен те хастарлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Хĕрарăмсем суртыррисене, çĕрулми выранĕсене çумкурăксенчен тасатрĕç, çĕрулми купаларĕç, клевер утипе улăх утипе çулса пуçтарчĕç.

Хастарлă хĕрарăмсем — ваттисем те, çамрăккисем те активлăн ĕçлеççĕ. Ку тарана çитсе ватă колхозница Александра Лазарева 88 ĕçкунĕ турĕ. Çавăн пекех Мария Иванова, Мария Егорова т. ыт. те 100 ĕçкунне яхăн турĕç те ĕнтĕ.

Анастасия Прохорова юлташ доярка пулса ĕçлет. Кăçал вăл çамрăк пăрусене 100 процентĕнчех пăхса ӳстерчĕ, сĕт-çу тухăçлăхне те ӳстересех пырать.

Сыснасене пăхаканĕ Елизавета Сильвестрова тата чăх-чĕнсене пăхаканĕ Евдокия Иванова юлташсем те аван ĕçлеççĕ.

Хĕрарăм колхозра — пысăк вăй. «Политотделец» колхозри колхозницăсем, Хĕрлĕ Çара пулăшас майпа, вăйлă тырпула кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пуха кĕртессишĕн кĕрешеççĕ.

ГР. ЛИВАШ.

Ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать

Первомайскри крахмал завочĕн коллективĕ ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пырать. Завод июль уйăхĕнче брага, квас, сироп туса кăлармалли плана 218 процент тултарчĕ. Дементьев, Ендеев, Максимова, Тимошкина, Лыскова, Петрова, Грачева тата ытти рабочисем те ĕç нормине 150 процентран кая мар тултарса пыраççĕ.

Заводра ĕçлекен рабочисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне те тимлесех туса пыраççĕ. Каннă вăхăтра рабочисене кулленех хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсене вуласа параççĕ, час-часах уйрăм ыйтусем тăрăх калаçусем пулаççĕ.

В. ДАВЫДОВ.

Примерлă конюх

Анатри-Кушкĕçе ялĕнче (Çĕрпӳ р.) 1930 çулта «Ĕмĕт» колхоз организациленнĕ. Иван Петрович Петров юлташ, колхоза çав çул кĕнĕ те, колхоз лашисене пăхма пуçланă.

Унтанпа вунă çул ытла иртрĕ ĕнтĕ. Вунă çул ытла Петров юлташ конюх пулса ĕçлет. Лашасене вăл лайăх пăхать: вăхăтра шăварать, вăхăтра çитерет, витене таса тытать, лашасене яланах хылчăклать.

Петров юлташ пăхакан лашасем уйрăмăнах мăнтăр, ĕçре нихăçан та ывăнмаççĕ.

—Лашасене пăхма ытлашши ăсталăх кирлĕ мар. Пуринчен ытла шыв пама пĕлмелле. Вăхăтне пĕлмесĕр шăварсан, темле лайăх лашана та пăсма пулать. Вăхăтра шăвармасан, умĕнчи апатне çимесĕр тăрать. Çавăнпа та лашасене вăхăтне тата виçине пĕлсе шăвармалла,—тет Петров юлташ.

Петров юлташа иртнĕ çулта фермăри кĕресене пăхма хушрĕç. Вăл хăй пăхакан кĕресенчен пуринчен те тиха илчĕ.

Гр. ПЕТРОР.

Германи фашисчĕсем вак халăхсене мĕнле çаратаççĕ

Европăра вунă çĕршыв ытла фашистла милитаризм ури айĕнче асапланать. Гитлер, Геринг тата вĕсен компанийĕ оккупациленĕ çĕршывсенчен хăйсем валли Европăра колонисем тума тăрăшаççĕ.

Фашистла режимăн тара кĕрĕшнĕ борзописецĕсем, пĕр вăтанма пĕлмесĕр çапла çыраççĕ: Германисĕр пуçне Европăра урăх ниепле çĕршыв та хăйĕн промышленноçне тытма пултараймасть, теççĕ. Фашистла колонизаторсен шухăшĕ тăрăх, индустри аталанни кунта «производительнăй» мар иккен. Çавăнпа та ĕнтĕ вĕсем оккупациленĕ районсенчен промышленность оборудованине турттарса тухаççĕ, рабочийĕсене яла, Германирен килсе тулнă помещиксен чăпăркки айне хăваласа яраççĕ, е вунтвар пинĕн çĕршыв тулашне ирĕксĕр ĕçлемелли вырăна яраççĕ. Чехири, Польшăри, Данири, Бельгири, Финляндири тата ытти çĕршывсенчи миллионсăрă ытла рабочисене фашистла Германине хăваласа илсе пынă. Унта вĕсем, «чи аялта тăракан тата хаксăр раса» представителĕсем шутланса, чи йывăр та таса мар ĕçе туса пыраççĕ. Тăвăр бараксенче чăкрашса пурăнаканскерсем, Германи ĕçхалăхĕнчен уйрăм усраканскерсем, çак этемсем чура пулса тăнă, вĕсенчен темтĕрлĕ мăшкăласççĕ. Германи рабочийĕ ютçĕршыври рабочине сывлăх сунса алă парсан, е пирус парсан пысăк айăпа кĕрет, ăна каторжнăй приговор кĕтсех тăрать.

Акнă тырăна саранча тĕпренех пĕтерсе пынă пек, Германи фашисчĕсем оккупациленĕ çĕршывсене çуклăх тата выçлăх илсе килчĕç. Çимелли япаласем тĕлĕнчен темиçе çул хушши çитменлĕх курман Данипе Голландине вĕсем хăрушă выçлăха хăварнă; Германи фашисчĕсем çак çĕршывсенчен юлашки çăкăр тĕпренчĕкĕсене турттса илсе каяççĕ. Данири ялхуçалăх совечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи оккупацилеменĕренпе (1941 çулти март тĕлне) Данире сĕт-çу промышленноçĕ 35 процент ытла чакнă, çăмарта продукцийĕ 55 процент ытла сахалланнă. Дани рабочийĕсем çурри ытла ĕçсĕр лараççĕ, е эрнере пур кун та мар ĕçлеççĕ. Голландири хаçат çĕршывра сĕт продукцийĕ 40 процент таран чакни çинчен пĕлтерет; Германия оккупациленĕ хыççăн çулталăк хушшинче выльăх-чĕрлĕх хисепĕн виççĕмĕш пайĕ чахнă. Çапла пулин те Голланди хресченĕсен кăçалхи июлĕн 1-мĕш тĕлне оккупаитсене 360 пин пуç ытла выльăх пама тивнĕ. Голландири хресченсен организацийĕн представителĕсем оккупацилле влаçсенчен çак нормăна чакарма ыйтсан, Германин çар комендантĕ приказа вăхăтра пурнăçа кĕртме хушнă, ăна тумасан чи çирĕп мерăсене йышăнатпăр, тесе хăратнă. Выльăха пусни, унăн сăмахĕ тăрăх «чи рациональнăй мероприяти» пулса тăрать имĕш. Голландире выльăх-чĕрлĕх усрассине выльăх апачĕ çукки пĕтерсе пырать. Германи Голландирен 80 процента яхăн утă турттарса тухать. «Таймс» хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çулта, çĕрулми начар пулнă пулин те, нимĕçсем Чехирен пиншер вагон çĕрулми турттарса кайнă.

Чи ĕмĕтсĕррĕн çаратаканни Герман Геринг пулса тăрать. Унăн аслашшĕсем Хĕвеланăç Германире шултра заводчиксем пулнă, анчах хăйсен вăхăтĕнчи спекуляцине хăтланса хăйсен капиталĕсене çухатса пĕтернĕ. Геринг Гитлерăн чи çывăх çынни, вăл Германири 700 пин ытла рабочине служащи тытакан чи шултра монополистла концернсенчен пĕрине тытса тăракан хуçа пулăа тăрать. Пĕрлештернĕ заводсен «Герман Геринг Верке» ятлă обществи малтан Вăтам Германири облаçсенчен пĕринче тимĕр тăпри кăларса тăнă. Ют территорисене оккупацилеменĕсемĕн çак капиталистла монополи пысăкран пысăкрах ӳссе пынă. Австрине турттса илнĕ хыççăн вăл Штирири сăрт-ту промышленноçĕн владенийĕсене (кунта нумай заводсем кĕреççĕ, сăмахран, Штирири хурçă шăратакан заводсем), колчеданпа туплаллă вырăнсене, шамотнăй заводсене, Австрири чи шултра автозавода (Штейер-Даймлер-Пух), машинăсем тата вагонсем тăвакан Зиммеринг заводне, Паукер ятлă акционерлă обществăн машинăсем тăвакан заводне, металлообрабатывающи промышленноçăн нумай предприятийĕсене хăйĕн аллине çавăрса илнĕ. Кунсĕрпуçне, çав концерн Австрири «Эстэррайхише кредит гезельшафт унд винер банкферейн» ятлă банкăн акционерĕ, тата çавнашкалах Австрири нефть промышленноçĕн «Фонте» ятлă чи пысăк предприятине тата гостиницăсемпе ресторансене объединенине тытса тăраканни пулнă. Чехословакине пайланă вăхăтра Герингăн концернĕ Чехири йывăр тата çар промышленноçĕн нумайĕш предприятийĕсене тата Словакири йывăр промышленноçăн мĕнпур предприятийĕсене хăйĕн аллине çавăрса илнĕ.

Гитлерăн «Фелькишер беобахтер» ятлă органĕ кăçал майăн 27-мĕшĕнче Люксембургпа Бельгин сăрт-ту промышленноçĕпе хура металлургийĕ тувă «результатсем» çинчен панă пĕлтерĕвре пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерӳре, çак çĕршывсене оккупациленĕ хыççăн часах темиçе çын «пысăк полномочисем илчĕç», тенĕ. Хаçат вĕсене çынна асăнать, вĕсене предприятисене «йышăнма» хушнă. Вĕсем çаксем: шултра заводчик Рехлинг, генеральнăй директор Раабе, капитан Штейнбринк —виççĕшĕ те Германири «Штальферейн» ятлă металлурги концернĕн правлени членĕсем.

Нимĕçсен пиллĕк чи пысăк банкĕ оккупациленĕ çĕршывсенчи мĕнпур кредитла учрежденисемпе перекет кассисене хăйсен аллине çавăрса илнĕ. 1937 çулта Германи банкĕн балансĕ 3 миллиард марка пулнă. Германин ютçĕршывсене турттса илес тĕлĕшпе пынă политикин виçĕ çулĕ хушшинче Германи банкĕ хăйĕн балансне 5.315 миллион маркăна çитернĕ, тата финанс тузĕсĕн тупăшăсем 142 миллионран 170 миллион маркăна çитнĕ.

Монополистла компанисене пуйтарма фашистсем Германи халăхне ютçĕршывсене турттса илмĕ вăрçа хăваласа тухрĕç. Пуяссишĕн, мул пухассишĕн вĕсем темĕнле преступленисем тума та хатĕр.

Чуралантарнă çĕршывсенчи 150 миллионлă халăх Германи фашизмĕн юнлă урисем айĕнче асапланать. Анчах Германири миллионшар рабочисемпе хресченсем, чуралантарнă халăхсен массисем, юн ĕçме юратакан фашистла правительсем—вĕсен чи усал тăшманĕсем, прогресăн, ирĕклĕхĕн тата культурăн тăшманĕсем пулнине лайăхрах та лайăхрах чухласа илеççĕ.

И. АКС.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин авиаци министерстви кăларнă коммуникене парать, унта çапла каланă: ĕнер çĕрле Германи авиацийĕ Англи территорийĕ çинче пысăк активлăх кăтартман. Çĕршывăн хĕвелтухăç тата кăнтăр-хĕвеланăç енчи пайĕн хăшпĕр пункчĕсенче пăрахнă бомбăсем нимĕнле пысăк сиен те кӳмен. Жертвăсем пулни çинчен сведенисем çук.

Июлĕн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем хĕвеланăç Германи çине пырса тапăннă.

Англи авиацийĕ Киркенес тата Петсамо çине пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин тинĕс министерстви кăларнă коммуникене парать, унта çапла каланă: июлĕн 31-мĕшĕнче Англин тинĕс авиацийĕ Киркенес (Норвегия) тата Петсамо порчĕсенче тăракан Германи суднисем çине пырса тапăннă. Петсамора суднăсем сахал пулнă, çавăнпа пуринчен ытларах порт сооруженийĕсем çине хытăрах тапăннă. Противник зенитнăй артиллерийĕпе, сывлăша противникăн истребителĕсем вĕçсе çĕкленнĕ. Анчах та бомбăсем тĕл ӳкнĕ. Складсемпе нефтехранилищĕсенче пушарсем хыпа-хыпа тухнине курма пулнă. Порт сооруженийĕссне пысăккăн сиенленĕ.

Киркенес портĕнче Германин хăвăрт ишекен «Бренст» ятлă çар карапĕ çине икĕ бомба ӳкнĕ. Çав карапăн водоизмещенийĕ 1.460 тонна, вăл 87 миллиметрлă 6 зенитнăй орудипе хĕçпăталланнă. Вăрçă пуçланиччен унпа учебнăй карап вырăнĕнче усă курнă. Тăвата грузовой пароходран кая мар сиенленĕ. Çапăçу вăхăтĕнче Германин «Мессершмитт» йышши вĕçĕ истребительне тата «Юнкерс-87» йышши пĕр бомбардировщикне персе антарнă.

Италин мĕнпур Хĕвелтухăç Африкине оккупацилени çинчен Англи влацĕсем пĕлтерни

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Ютçĕршыв ĕçĕсен министерствипе çар министерстви иккĕш пĕрле заявлени пичетлесе кăларнă, унта «халиччен Итали Хĕвелтухăç Африки тесе шутланнă пĕтĕм территори Англип оккупациленĕ район пулса тăрать», тесе пĕлтернĕ.

Англин суту-илӳпе сыхăну министерстви çав территорипи организацисемпе çĕнĕрен суту-илӳ тума пуçласси çинчен распоряженин пичетлесе кăларнă.

Германи влацĕсен Франципи террорĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Франципи çурçĕр енчи районсенчи халăхсем оккупантсене кураймаççĕ, вĕсем Англин Франци территорийĕ çине ирĕкĕрех анса ларма тивнĕ летчикĕсене тарма час-часах пулăшаççĕ. Çакна май Парижри хаçатсем Германин оккупацийлĕ влацĕсен распоряженине пичетлесе кăларнă, çав распоряженире французсене хытă асăрхаттарнă. Приказ тăрăх, оккупациленĕ территори çине анса ларакан Англи летчикĕсене пытаракан тата вĕсене çĕршывран тухса тарма пулăпахан çынсене вĕлересе. Англип анса ларнă самолечĕсем çинчен пĕлтермесĕр тăракан французсене те çавăн пек наказаннех параççĕ.

Германин дипломатиллĕ работникĕсем хăйсене хăйсем вĕлернĕ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: нумаях та пулмасть Лиссабона США-ран Германин дипломатиллĕ работникĕсен группи пырса ситнĕ, вĕсене США-ран Америка правительстви йышăннă решени тăрăх кăларса янă пулнă. Халĕ ĕнтĕ çакă палла пулнă: Америкăран кăларса янă консульство работникĕсенчен сахалтан та çиччĕшĕ Германипе тавăрăниччен вилнă лайăхрах тесе шутласа, Лиссабонра хăйсене хăйсем вĕлернĕ.

Америка журналĕ Германи летчикĕсем çинчен

Америкăра тухакан «Нэйшн» журнал майăн 31-мĕшĕнче тухнă номерте, Германи летчикĕсем хушшинче чи нумай сарăлнă чир—ăс-тăн арпашса кайни пулса тăрать, тесе çырнă. «Сахал вĕрентнĕ, вăй-хала ытлашши хурса ĕçленĕ тата хăйсен лăпкăлăхне часчасах çухатнă пирки,—тесе çырать журнал,—Германи летчикĕсем нумайĕшĕ ухмаха ернисен çуртне лекеççĕ. Венăран илнĕ çырура çапла çырнă: Австрири ват çынсен çурчĕсемпе психика тĕлĕшĕнчен чирлĕ çынсем пурăнакан санаторисене пушатаççĕ. Вăл çуртсене Германин психика тĕлĕшĕнчен чирленĕ летчикĕсене ярасçĕ».

Июлĕн 29-мĕш. (ТАСС).

Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартакан движени

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕн Лондонри посольствин адресĕпе Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулни çинчен калакан резолюцисем пит нумай лыраççĕ. Нумай йышлă организацисем Совет Союзĕнчи халăхсемпе Хĕрлĕ Çара саламлаççĕ, гитлерла Германие хирĕç кĕрешнĕ çĕрте ССР Союзне хăйсен мĕнпур вăйĕпе пулăшма пулаççĕ.

Ливерпульри тред-юнионсен совечĕ хăйĕн резолюцийĕнче çапла çырать: Ливерпульри рабочисем фашистла агрессорсене хирĕç кĕрешекен совет халăхĕпе пĕр шухăшлă. ССР Союзĕпе туслă çыхăнусем тытас çĕрте пур енчен те пулăшма пулни çинчен премьер-министр тата ĕçĕн наципллĕ совечĕ кăларнă декларацине совет саламлать. Совет фашизма çĕнтерес тĕлĕшпе мĕнпур рабочисене икĕ хут шумайтарах вăй хурса ĕçлеме чĕнет.

Çурçĕр Англири фабрикăсемпе судостроительнăй заводри рабочисен комитечĕ çапла çырать: «фашизма хирĕç геройла кĕрешекен вырăс халăхне эпир саламлатпăр тата тăшмана çĕнтерессине хăвăртлатма мĕн кирлине йăлтах тума пулатпăр».

Понтипиттри тред-юнионсен совечĕ (Кăнтăр Уэльс) хăйĕн резолюцийĕнче Германи фашизмне хирĕç паттăрăн кĕрешекен вырăс халăхне чĕререн саламлать. Эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр: совет халăхĕ хăйĕн тĕллевне пурнăçа кĕртĕ, фашистла йыткĕтĕвĕсене — Гитлерпа унăн мĕнпур шайкине çапса аркатĕ.

Совет халăхне саламласа çырнă çырусене Вульвич арсеналĕнче ĕçлекен рабочисенчен те илнĕ. Вĕсем çак испытанисем вăхăтĕнче вырăс халăхĕпе пĕр майлă пулнине кăтартаççĕ, фашистсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Совет Союзне мĕн май килнĕ таранах пулăшма пулаççĕ.

Кембриджри килхуçи хĕрарăмĕсен комитечĕ совет посольствине çакăн пек резолюци ярса панă: Кембриджри килхуçи хĕрарăмĕсем Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем çине ăшă кăмăлпа юратса пăхни çинчен пĕлтереççĕ.

Эпир шансах тăратпăр: çĕнтерӳ тăвиччен эсир çирĕппĕн кĕрешĕр, çав çĕнтерӳ чăн-чăн çирĕп мир туса хума пулăшĕ. (ТАСС).

Англире советăн хроникăллă кинофильмĕсене пысăк ăнăçлăхпа кăтартаççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Хальхи вăхăтра Лондонра тата Англин ытти хулисенче советăн хроникăллă кинофильмĕсене кăтартаççĕ. Вĕсене пысăк интереспе пăхаççĕ. Ĕнер Лондонри хроникăллă пĕр кинотеатр умĕнче пысăк черет тăнă. Театр залĕ йăлтах тулса ларнă. Совет танкĕсем, çавăн пекех совет летчикĕсен паттăрлăхĕпе хастарлăхĕ куракансене питех те хытă тĕлĕнтернĕ. Мускавра сывлăшран пырса тапăннинчен сыхланас тĕлĕшпе тăвакан мероприятисене, совет медсестрисене мобилизациленине, партизансем хĕпăпалланнине кăтартакан кадрсем калама çук пысăккăн интереслентернĕ. Комментатор: «халĕ вырăссен союзникĕсен — Германин çар машинине хирĕç пĕччен кĕрешекен союзниксен кĕрешĕвĕ çинчен» асăнсан, залра тăвăллăн алă çупнă.

Англири кинотеатрсен экранĕсем çинче Англипе Совет Союзĕ хушшинче килĕшӳ туса алă пуснине кăтартнă. Экран çинче Сталин юлташ курăнсан, ăна хĕрӳллĕн алă çупса кĕтсе илнĕ. Лондонăн çурçĕр пайĕнчи кинотеатрсенче советăн хроникăллă кинофильмĕсене кăтартнă чухне хĕрӳллĕ овацисем тунă.

Турцире Совет Союзĕнчи халăхсене юратнине палăртса пани

АНКАРА, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Турци халăхĕн тĕрлĕрен сийĕсем фашистла Германие хирĕç кĕрешекен Совет Союзĕнчи халăхсене юратнине палăртса параççĕ. Кунта çапла каласçĕ: çак вăрçăна сыхланса кайса, Гитлер хăйĕн шанчăкне çухатрĕ, унăн çарĕн положенийĕ ытларах та ытларах йывăрланса пырать, теççĕ. Тахçантанпах тухса тăракан «Ени Асыр» ятлă палла хаçат çапла çырать: «Вăрçă хĕле кĕрсе кайсан, Германия вăрçă тĕлĕшпе лайăх мар сюрпризсем умне тухса тăрать. Нимĕçсен çапăçма яланах хатĕр тăракан тата калама çук пысăк резервсем тытса тăракан противнике хирĕç ирĕккĕрех çапăçма тивет».

Юлашкинчен хаçат: вăрçă малалла та чарăнмасан Германи халăхĕн шухăш-кăмăлĕ пăсăлса кайма пултарать, тесе кăтартса парать.

Финн халăхĕ ССР Союзне юратать

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). «Ди Вельт» журнал çырнă тăрăх, Сталин юлташ сăмахĕ Финляндири çĕнĕннисем хушшинче анлăн сарăлать тата çав сăмах вĕсене пысăккăн интереслентернĕ. Финляндирен урăх çĕре куçарнă арăмĕ патне янă çырăвĕнче пĕр рабочи çапла çырать: «Эпир пĕлтĕпĕр: вырăссем хăйсен çĕршывĕшĕн кăна мар, тата пусмăрта пурăнакан мĕнпур халăхсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Хĕрлĕ Çара хăвăртрах çĕнтерӳ тума сунатпăр».

Çакăн пек шухăш финн ĕççыннийĕсем хушшинче анлăн сарăлнă. — тесе çырать юлашкийчен журнал.

Германире шикленсе ӳкнĕ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). «Нейе Цюрхер цейтунг» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çырнă тăрăх, Германи халăхĕ Хĕвелтухăç фронтĕнче Германия çĕнтерӳ тăвассине шанма пăрахнă. Çапăçусем пиллĕк эрне хушши пынă хыççăн нимĕç хаçачĕсен Хĕрлĕ Çарăн çапăçури пысăк пахалăхĕсене ирĕккĕрех йышăммалла пулса тăнă. «Динст Амс дейчланд» ятлă официальнăй бюллетень, кучухнехи вăрçа вырăс çарĕ çавтери лайăх вĕренсе хатĕрленнĕ, тесе çырать. Нимĕçсем механизациленнĕ вăрçăн опычĕсемпе лайăх усă куракан тата Германи стратегине отпор паракан противникпа тĕл пулчĕç. Бюллетень: вырăс салтакĕсен хастарлăхне шутарма май çук, тесе ӳпкелешет.

Чехословаки генеральнăй штабĕн членĕ пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). Чехословаки генеральнăй штабĕн членĕ полковник Гутник хаçатсен корреспонденчĕсемпе калаçнă чухне: хĕвелтухăç фронтĕнче нимĕçсен резервисем пĕтсе ситеççĕ, тесе каланă. Гутник шумаях пулмасть çар миссипе пĕрле Лондонран Канадăна пырса ситнĕ. Хальхи вăхăтра вăл США-ра пурăнать.

Гутник çапла пĕлтернĕ: нимĕçсем чехословаксене пĕрмаях пĕтереççĕ. Чехословаксем тĕлĕшпе тăвакан преступленисем тата çĕршывра Германи ожупанчĕсен пусмăрĕ айĕнче пурăнакан çынсен условийĕсем çинчен çырса кăтартма та май çук. Национал-социалистла ордасем Чехословаки чикки урлă каçса кĕнĕ хыççăн пирĕн халăх нимĕçсене хирĕç пĕрмаях кĕрешет. Пирĕн халăх пĕр çĕре пĕрлешнĕ, вăл национал-социалистсене хирĕç кĕрешессине вăйлатнăçем вăйлатса пырать.

Фăшистсен пуçлăхĕсем вăрланă укçа-тенкĕсене сыхласа усрасси пирки шикленеççĕ

ЛОНДОН, августăн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви АФИ агентствин пĕлтерӳне парать. Вăл пĕлтерӳре çапла каланă: нейтральнăй çĕршывсенчи ĕçсене лайăх пĕлсе тăракан çынсенчен илнĕ сведенисем тăрăх, юлашки вăхăтра Кăнтăр Америкăра Германие хирĕç тăвакан мероприятисем, Германи посланникне Боливирен кăларса янă пирки нацистсен пуçлăхĕсем хыттăн шикленеççĕ. Вĕсем хăйсен «перекетленĕ» укçи-тенкисене Америкăри банксенчен илсе Швейцарине куçарма тытăннă. Çав çынсем пĕлтернĕ тăрăх, национал-социалистла партин пысăк вырăнта тăракан чинĕсенчен нумайĕшĕ, вăл шутра фашистсен ĕç фончĕн руководителĕ Лей тата «Фелькишер беобахтер» хаçат редакторĕ хăйсен укçи-тенкисене Кăнтăр-Америкăри банксенчен илсе, вĕсене Швейцарири банка хунă. Цюрихри банксенчен пĕри Германи вклачĕсене илнĕ те ĕнтĕ. Вăл вкладсем Швейцари франкĕпе темиçе миллион франк шутланаççĕ. Çав вкладсен шучĕ ӳссех пырать.

Филиппины утравĕсенче оборонăллă мероприятисене вăйлатни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 31-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн Филиппины утравĕсенчи хĕрарăмĕсем Америкăн Инсет-Хĕвелтухăçĕнчи çарĕ çумне çийĕнчех пĕрлештермелли плана пичетлесе кăларнă. Планра Филиппины утравĕсем çинчи резервистсенчен дивизисем туса йĕркелессине пăхнă. Унта резервистсен хисепĕ 140 пин çын шутланать. Кунсăр пуçне, планра стратегиллĕ районсенче войскăсем валли пурăнмалли çуртсемпе ытти çуртсем хăвăрт тăвассине, çĕнĕ аэродромсен строительствине вăйлăн туса пымаллине пăхнă.

Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: граждăнла халăха хӳтлеме Филиппины органĕсем ютçĕршывсенчен халех 100 пин противогаза сутăн илме сĕннĕ. Филиппины утравĕсем çинче миллион çурă противогаз хатĕрлеме палăртнă. Вăрçă пулас-мĕн пулсан, правительствăн хăшпĕр учрежденисене Манилы хулинчен куçармалли плана президент Квезона тăратнă.

Кӳкеçри (Шупашкар р.) вăтам шкул çумĕнче физкультура площадки туса пĕтернĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: учитель М. Савельев тата физкультурница А. Зыбина тренировка тăваççĕ.

М. АНТОНОВ фото-ӳкерчĕкĕ.

Краеведени музейĕн залĕсенче

«Эпир вĕсене çапса çĕмĕрнĕ, халĕ те çĕмĕретпĕр тата малалла та çапса салатăпăр!» Чăваш республикинчи краеведени музейĕнче вырăс халăхĕн авалхи çар ĕçне кăтартса парас тĕлĕшпе усă выставка çавăн пек чапла сăмахсемпе пуçланать.

Хамăран тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсен пит нумай портречĕсем, тĕрлĕ картинăсемпе сăн-ӳкерчĕксем, документсем вырăс халăхĕ ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç çавтери паттăрла çапăçнине кăтартса параççĕ.

Пирĕн умра князь-патриотăн Александр Невскин портречĕ. Халăх массисем интервентсене хирĕç паттăрла кĕрешнине кăтартса паракан ытти материалсене те кунта нумай пухса хунă. Çак экспонатсем халхи вăхăтри юнĕçсен фашистла ушкăнсен предшественникĕсем — çын пурлăхне туртса илсе пуйма юратакан тевтон рыцарĕсем XIII ĕмĕрте Балти таврашĕнчи çĕршывсем çине вăрă-хурахла тапăнни çинчен каласа параççĕ. 1242 çулта рыцарьсем вырăс çĕрĕ çине — Псковпа Новгород хулисем çине тапăннă.

Александр Невский вырăс халăхне нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçма чĕннĕ. Вăл чĕнсе калаçи пĕтĕм вырăс çĕршывне янратнă.

Халăх рыцарьсене хирĕç çапăçăва çĕкленнĕ. Александр Невскин пысăк çар пухăннă.

Схема çинче нимĕçсен ытă-рыцарĕсем хăйсен «сысналла» тактикипе усă курса вырăс çарĕсене хирĕç пынине кăтартнă. Анчах, вырăс çарĕсем, нимĕçсен «сыснине» вырăс çĕрĕ çине шаларах илсе кĕрсе пур енчен те çавăрса илнĕ те, пуçĕнех çапса аркатнă. Нимĕçсене вырăс çĕрĕ çинчен хăваласа янă.

Унтан кайран Россипăри халăхсем ютçĕршыв захватчикĕсене пĕр хут çеç мар çапса çĕмĕрнĕ. Вырăс халăхĕ нимĕçсене çапса аркатса, вĕсене Берлин патне çитичченех хăваласа кайнине тата Прусси столицине кĕмелли çăраççисене хăй аллине илнине истори лайăх пĕлет.

Суворов образĕ чĕрĕ çын пекех тухса тăрать. 1760 çулта Берлина илнĕ чухне вăл çамрăк капитан пулса çапăçнă. Çав çапăçу хыççăн Прусси королĕ Фридрих II çапла çырнă:

«Халĕ те чĕрĕ юлнипе эпĕ телейлĕ. 48 пиллĕ çартан манăн 3 пинĕ те юлмасть. Эпĕ çакна каланă чухне пурте тараççĕ, çак çынсене тытса тăма манăн текех власть çук ĕнтĕ... Хаяр телейсĕрлĕх. Эпĕ ăна тӳссе ирттереймĕстĕп... Манăн урăх нимĕнле средствăсем те çук, тĕрĕссипе каласан, пурте пĕтнĕ тесе шутлатăп». Фридрих II пуçланă вăрçă унăн çакăн пек намăслăн вĕçленнĕ.

1812 çулта Наполеона хирĕç пулнă отечественнăй вăрçă çинчен калакан документсем выставкăра чылай пысăк вырăн йышăнаççĕ. Кунта пурте пĕрин çинчен — вырăс халăхĕн нихăçан асран каймăн паттăрлăхĕ çинчен, вăл хăйĕн никама пăхăнасмарлăхне, ирĕклĕхне сыхласа хăварассишĕн паттăрла çапăçни çинчен каласа параççĕ.

Экспонатсем Украина çине тапăннă нимĕç империализмне хирĕç совет республики мĕнле паттăрлăхпа çапăçнине пит уçăмлăн сутатса параççĕ. Нимĕçсем 1918 çулта Украинăна ярса илме хăтланни те ăнăçсăр пулнă тата намăсла вĕçленнĕ. Выставкăри нумай документсем чапа тухнă геройăн Н. Щорсăн вĕçĕ-хĕррисĕр паттăрла ĕçĕсене çутатса параççĕ.

Выставкăри пур материалсем те вырăс халăхне никам çĕнтерме пултайманнине яр уççăн кăтартса параççĕ. Вĕсем çакăн çинчен калаççĕ: пирĕн çĕршыв çине улттăлăн тапăннă тăшмана эпир вырăс çĕрĕ çине тапăнма хăтланнă, ытти тăшмансене çапса аркатнă пекех çапса аркататпăр тата тĕпшех пĕтеретпĕр.

В. ИСАЕВ.

Мăнтăрккапа ырханкка

(Чехов калавĕнчи евĕрлех)

Фини капитанĕ Тăмписмейнен таз çине кутăн кĕрсе ларчĕ те урисене тăратрĕ.

Аван иккен мунчара, аçа çапасшĕ! Çăвăн та çăвăн кунта, çапăн та çапăн! Ни бомба килсе ӳкмест пуç тăррине, ни пуля лекмест. Ытла снвĕ те мар, шăрăх та мар. Шăп кăна лĕп шыв тултарнă ваннăра выртнă пек.

Капитан Тăмписмейнен сак çине тухса ларчĕ те пуçне таз ăшне персе чикрĕ. Унтан хытса кайнă кĕпе сунăнь татăкĕпе çăмламас урисене, ырхан кăкăрне, ĕнсине çуса тасатрĕ.

Лайăх тылра пурăнма!

Пушă таза йăтса кран патнелле утнă чух, капитан пĕр мăн хырăмлă çын çине пырса тăрăнчĕ.

— Швинья! — терĕ вăл: сасартăк, çынна тытса чарса. — Сысна эсĕ! Мĕншĕн ман ура айне пырса кĕретĕн? Мĕншĕн эсĕ мана курсан виç сухрăмран пăрахса тармастăн? Пĕлетĕн-и эсĕ эпĕ камне? Капитан эпĕ. Сирĕн хуçăр эпĕ!.. Эсĕ салтак пулĕ?

Мăн хырăмлă çын пĕртак кутăн чакрĕ те сăмах хушма хăтланса пăхрĕ.

— Капитан...

— Эпĕ сана парăн капитансем! — сухăрса ячĕ Тăмписмейнен, мăнтăр çын çинче тăрăнма тытăнса. — Капита-ан тесе тăрать, хăравçă сысна эсĕ, акă кам! Сирĕнпе пĕр ăнăçлă наступлени те тума çук. Хĕрлисем хĕсме тытăнсанах мулкачсем пек тарма тытăнатăр, хăваласа çитме те çук...

Мăнтăр çын тем калама хăтланнăччĕ кăна, капитан Тăмписмейнен тата хытăрах хĕрсе карĕ.

— Виçĕмкунхи поражени мĕн пирки пулчĕ тетĕн эсĕ, сысна? Мĕншĕн аркатса тăкрĕç пирĕн пĕр полка? Кала-ха, мĕн пирки пулчĕ, э? Сире пула намăс курма тиврĕ! Сирĕн айăпша пулчĕ. Пĕр çын юлмиччен шăкĕлчерĕç вырăс салтакĕсем. Хам аран-аран тарса хăтăлт..

— Капитан!

— Молчать!!! — пыр тĕпне хыртарса кăшкăрса ячĕ капитан Тăмписмейнен.— Эпĕ каласа чух уй тункати пек хытса тăрас пулать санăн... Фронта çитсен мăн хырăму часах...

Капитанăн пит çăмартине сасартăк мăнтăркка çынăн супăньлĕ алли пырса шаплатрĕ.

Тăмписмейнен сулăнса карĕ те, темĕн ăнланса илнĕ пек пулса, чĕтреме пуçларĕ.

— Эсĕ... м... м:.. кам пултăн?

— Нимĕç лейтенанчĕ эпĕ, ка-пи-тан, терĕ мăн хырăмлă çын. — Туйăн-и, пирĕн алăсем мĕнле?

Ырханкка капитан Тăмписмейненăн сăнĕ сасартăк шуралса карĕ, пĕвĕ çурта пек тӳрленчĕ, тазĕ урайне ӳкрĕ. Часах унăн пичĕ çине йăваш кулă çиçсе ярăмланчĕ. Хăй вăл ăман пек пĕр çĕре пустарăнчĕ, пĕчĕккĕленчĕ, пĕрĕнчĕ, хутланса ларчĕ...

— Эпĕ, ваше превосходительство... герр лейтенант... мĕн.. Çав тери хавас! Калама-а çук... Хи-хи!

— Сыснасем эсир! — çамкисене пĕркеленторчĕ мăнтăркка. — Сирĕнпе... чышкăпа та нухайккапа çеç калаçмалла...

— Каçарăр... Ахалех мухтатăр.. — тата та кукленерех аванса кĕчĕ капитан Тăмписмейнен. — Эсир, ваше превосходительство, герр лейтенант, пурне те асăрхаса, ертсе пынипе... хай, мĕнле калас.. Чăмламалла сĕткен пек... Эсир килмен пулсан, пирĕн аслă Финляндди.. халиччен арканса та каяччĕ пуллĕ... Эсир тытса илнĕренпе.. çу çинчи пек савăнса пурăнатпăр. Пурте çапла каласçĕ. Ну, лешĕ... халăх выçă вилеп пуçланă, тенине итлемелле мар ăна.. Вăл... суя... Хи-хи!

Ку сăмахсене хирĕç мăнтăркка темĕскер каласшăн пулчĕ, анчах ырханкка капитанăн сăн-питĕнчи пăхăнаслăх палли унăн калас сăмахне такăнтарчĕ. Вара вăл ырханккаран пăрăнчĕ те явăнса тăракан пăс ăшне кĕрсе çухалчĕ.

Ырханкка Тăмписмейнен вăл кайсан та пайтахчен пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе тайăлса, фокусник пек хихиклетсе тăчĕ.

Ф. УЯР.

Пахча-çимĕç пухма хатĕрленеççĕ

СĔРПУ. Колхозсен уйхирĕсенче вăйлă тырпул çитĕнет, пахчасенче, участоксенче, колхозсен çачĕсенче пахча-çимĕç, улма-çырласем шĕреççĕ.

Пахча-çимĕçсене пĕр тăкаксăр пухса кĕртсе, хĕлле валли ӳçĕтсе, типĕтсе, е чĕрĕлле пухса хатĕрлес ĕç суту-илӳ тата заготовка енĕпе ĕçлекен организацисем умне çирĕппĕн тухса тăрать. Ку ĕç, уйрăмăнах вăрçă вăхăтĕнче, пит те кирлĕ. Çакна райпотребсоюза, хулари потребитель обществинче тата Торгплодоовощьтрестăн межрайоннăй конторинче ĕçлекенсем аван ăнланаççĕ. Çавăнпа та халĕ вĕсем пахча-çимĕçсем хатĕрлес ĕçе тимлĕн хатĕрлеççĕ.

Райпотребсоюз хăйĕн планĕ тăрăх хĕлле валли 60 тонна купăста, 90 тойна çĕрулми, 45 тонна хăяр, 15 тонна помидор, тĕрлĕрен пахча-çимĕçсем 32 тонна хатĕрлесе хурать. Хуларн потребитель обществи тĕрлĕрен пахча-çимĕçсене 26,6 тонна тата Торгплодоовощьтрестăн межрайоннăй конторн — 70 тонна ытла хатĕрлет.

Торгплодоовощьтрестăн конторн пахча-çимĕçсене пухма 3 склад, 971 ещĕк, 96 пыл катки, 5.762 чăпта, 578 корзина, 1,32 тонна стружка хатĕрленĕ. Çавăн пекех райпотребсоюзпа горпо та помидор тăварлама 17 пичке, купăстапа хăяр тăварлама 180 катка хатĕрлесе ситернĕ. Складсемпе нӳхрепсем тата подвалсем çителĕклĕ.

Торгплодоовощьтрестăн конторн техникăллă культурăсене хатĕрлеме тытăнчĕ те ĕнтĕ. Паянхи кун 130 килограмм çырла, 300 килограмм укроп т. ыт. те хатĕрлерĕ.

Гр. ПЕТРОВ.

Хĕл çитес умĕн

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Хула Совет исполкомĕн çуртйĕрсен управленийĕ хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе иртнĕ çулхинчен нумай лайăхрах ĕçлет. Çак вăхăта кĕлсен хваттерсене капитальнăй ремонт тумалли плана 66 процент ытла тултарнă.

Планпа çирĕплетнĕ тăрăх, кăçал вак-тĕвек ремонтсем тума кăна 12 пин тенкĕ расходламалла, халĕ 8.668 тенкĕ расходланă. 16 çуртри е 35 хваттерти кăмакасемпе трубасене юсаттарнă. Тимĕр витнĕ çурт тăррисене сăрлаттараççĕ.

Сентябрĕн 1-мĕшĕччен коммуналлă пĕтĕм çуртйĕрсене хĕле хатĕрлесе çитереççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, ĕçкурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5510.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ 345. ф. б 98—84 п. л.